ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

ВКП(б) Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1952 çул Май 27
ытларикун
№ 104 (8756)
Хакĕ 20 пус.
35-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

СТАЛИН ЮЛТАШ ПАТНЕ ЯНĂ ÇЫРУРА ИЛНĔ ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕНЕ ЧЫСЛĂН ПУРНĂÇЛАССИШĔН. Вăйлă тырпул çитĕнтерессишĕн, Пĕтĕм Союзри Ялхуçалăх выставкине хутшăнма тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешер! (1 стр.).

Шкулсенчи экзаменсем (1 стр.).

Дон шывĕ Атăл патнелле пырать (1 стр.).

Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Англи тата Франци Правительствисене панă нотăсем (2 стр.).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. Суту-илÿ работникĕсене вĕрентсе воспитани парасси çинчен. ВКП(б) райкомĕсен пленумĕсенчен; А. Жирнов.—Агитаторсен шкулĕнче вĕреннĕ хыççăн (3 стр.).

С. Сидоров.—Яланхи комиссисем ĕçре (3 стр.).

М. Осипов.—«Коммунизм» колхоз выльăх апачĕ çителĕксĕр хатĕрлет (3 стр.).

Халăх демократи çĕршывĕсенче (4 стр.).

Корейăри ĕçсем (4 стр.).

Америка империалисчĕсем Çывăх тата Вăтам Хĕвелтухăçĕнче вăрттăн усал ĕçсем тăваççĕ (4 стр.).

Районти культура çурчĕ

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви хамăр çĕршывăри мĕнпур нацисен экономикипе культурине ÿстерме пур енчен те пулăшаççĕ. Партипе правительство пулăшнипе чăваш халăхĕн формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă культури хăвăрт аталанса пырать. Республикăра халĕ культура учрежденийĕсене хулара çеç мар, кашни районтах, кашни колхозрах курма пулать. Республикăри институтсемпе техникумсенче, училищĕсемпе шкулсенче çĕршер пин çын вĕренет. Библиотекăсемпе культура çурчĕсем, клубсемпе вулав çурчĕсем тата ытти культура учрежденийĕсем ялта та, хулара та ĕçсыннисен культура ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Культурăпа çутĕç валли Совет государстви нумай укçа-тенкĕ уйăрать. 1952 çулхи халăх хуçалăх планĕ тăрăх республикăра кăçал çĕнĕрен 85 библиотека тата 78 клуб уçмалла. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн апрель уйăхĕнче пулса иртнĕ иккĕмĕш сессийĕ районти культура çурчĕсемпе библиотекăсен ĕçне анлăлатса лайăхлатма çĕршер пин тенкĕ расходлама палăртрĕ.

Республикăра халĕ кашни район центрĕнче культура çурчĕ ĕçлет. Ĕçсыннисен культурине ÿстерес, вĕсем хушшинче Ленинпа Сталин идейисене сарас тĕлĕшпе районти культура çурчĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Иртнĕ çулталăк хушшинче республикăри культура çурчĕсенче лекцисемпе докладсем 1.500 пулнă, 6 пин хут ытларах кино кăтартнă. Районти культура çурчĕсенче художествăллă творчество коллективĕсемпе профессиллĕ артистсен ушкăнĕсем пин ытла тĕрлĕ спектакльсемпе концертсем лартнă. Кашни районтах культура çурчĕсенче агиткультбригадăсем ĕçлеççĕ, вĕсем ялсене кайса колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче кулленхи ыйтусем тăрăх сахал мар докладсемпе калаçусем ирттернĕ.

Районти культура çурчĕсем политикăллă информаци ĕçне туса пыраççĕ, совет законĕсем тата партипе правительство йышăннă решенисем çинчен ăнлантарса параççĕ, çав решенисене пурнăçа кĕртме ĕçсыннисене мобилизацилеççĕ. Культура çурчĕсем çумĕнче организациленĕ агиткультбригадăсем социализмлă ялхуçалăхĕнче тата промышленноçра малта пыракансен опытне сарас тĕлĕшпе те пысăк ĕç тăваççĕ.

Колхозлă ялсенче çĕршер клуб тата вулав çурчĕсем ĕçлеççĕ. Ялти клубсемпе вулав çурчĕсене ĕçлеме пулăшасси районти культура çурчĕсен пысăк задачи пулса тăрать. Калас пулать, паянхи куна районти культура çурчĕсем çав задачăна пурнăçа кĕртмеççĕ-ха. Ялсенче клубсемпе вулав çурчĕсем çителĕксĕр ĕçлени, чи малтанах, районти культура çурчĕсенчен чылай килет. Культура çурчĕсенче ĕçлекен работниксем, час-часах ялсенчи клубсемпе вулав çурчĕсенче пулса, ялта массăллă ĕçсем ирттерме пулăшмалла. Культура çурчĕ çумĕнче кашни районтах клубсемпе вулав çурчĕсенче ĕçлекенсем валли ялан ĕçлекен методикăллă консультаци пулмалла. Çавăн пек йĕрке халĕ чылай çĕрте çук-ха.

Партин идеологиллĕ ĕçĕнче районти культура çурчĕ те паллă вырăн йышăнать. Çакă вăл ВКП(б) райкомĕсем культура çурчĕсен ĕçне куллен ертсе пыма кирли çинчен калать. Хăшпĕр районсенчи культура çурчĕсенче лекциллĕ пропагандăна тата творчествăллă организацисен ĕçне çителĕксĕр организациленĕ. Литература, техника тата пĕтĕмĕшле пĕлĕве ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлекен кружоксем питех те сахал пулни, физкультурăпа спорт ĕçне аталантарас енĕпе кирлĕ пек ĕçлеменни— культура çурчĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсем пулса тăраççĕ. Массăллă ĕçе ытларах организацилес вырăнне хăшпĕр культура çурчĕсенче, ташă каçĕсем ытларах ирттереççĕ. Хăну вăхăтне культурăллă ирттерме пулăшасси, çавна май ташăсем ирттересси те, паллах, кирлĕ ĕç, анчах культурăллă-массăллă ĕçре культура çурчĕсен ытти тĕрлĕ формăсемпе ытларах усă курмалла. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен Управленийĕн районти культура çурчĕсен ĕçне ертсе пырассине тĕпрен лайăхлатмалла.

Хăшпĕр районсенче культура çурчĕсем кивĕ те тăвăр çуртсенче вырнаçнă. Вĕсене вăхăтра юсаса тăмаççĕ, таса тытмаççĕ, кирлĕ пек илемлетмеççĕ. Культура çурчĕсем çавăн пек пулни, чи малтанах, райсовет исполкомĕсем культура çурчĕсемшĕн кирлĕ пек тăрăшманни çинчен калать.

Районти культура çурчĕ райсовет исполкомне тÿрремĕн пăхăнса ĕçлет. Культура çурчĕн ĕç планне райсовет исполкомĕн культурăпа çутĕç пайĕ çирĕплетет. Райсовет исполкомĕ культура çурчĕн хуçалăхлă ĕçĕсемшĕн çеç мар, культурăллă-массăллă ĕç содержанийĕшĕн те ответлă. Районти культура çурчĕ ĕçсыннисен культура ыйтăвĕсене мĕнле тивĕçтерсе пыни çинчен, наукăпа техника, литературăпа искусство çитĕнĕвĕсене пропагандăлас ĕçе мĕнле йĕркелени, физкультурăпа спорт ĕçне сарас тĕлĕшпе мĕн туни, художествăллă пултарулăх ĕçĕ тĕлĕшпе мĕн туни çинчен исполком ларăвĕнче час-часах сÿтсе явса тивĕçлĕ кăтартусем парса тăрсан, культура çурчĕсен ĕçĕ чылай лайăхланнă пулĕччĕ. Чылай районсенче культура çурчĕсем ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен ăнлантарса парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Сăмахран, культура çурчĕсенче колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташ патне янă çырура мĕнле обязательствăсем илни çинчен те пĕлме çук. Илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешме мобилизацилесси районти культура çурчĕсен тĕп задачисенчен пĕри пулать.

Элĕк, Калинино, Тăвай, Сĕнтĕр районĕсенчи культура çурчĕсем хăйсен ĕçне яланах план тăрăх туса пыраççĕ. Ĕçе малтанах тĕплĕн шутласа планласа ирттерни нумай енлĕ культурăллă-массăллă ĕçе анлăн туса пыма пулăшать. Çавăн пек культура çурчĕсенче кун йĕркинче тăракан ыйтусем тăрăх лекцисемпе докладсем вăхăтра пулса иртеççĕ, литература вечерĕсем, концертсемпе спектакльсем час-часах пулаççĕ. Анчах та хăшпĕр районсенчи культура çурчĕсем—Вăрнарта, Çĕрпÿре, Канашра ĕçе план тăрăх ирттерме халĕ те хăнăхман, кино кăтартассисĕр пуçне кунта урăх нимех те тумаççĕ. Культура çурчĕсен ĕçĕнчи çав çитменлĕхе хăвăртрах пĕтерни кирлĕ.

Кирек ăçта та ĕç ăнăçлăхĕ кадрсенчен килет. Районти культура çурчĕн ĕçĕ те çавах. Культура çурчĕн директорĕ тата инструкторсем хăйсен ĕçне пĕлни çеç сахал, вĕсен, чи малтанах, ĕçе юрататкан, хамăр Тăван çĕршывшăн, ленинла-сталинла парти ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн парăнса ĕçлекен çынсем пулмалла. ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсен районти культура çуртĕнче ĕçлекен кадрсене çирĕплетес, вĕсене куллен воспитани парса пырас, вĕсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслесе тăрас енĕпе те ытларех ĕçлемелле.

Районти культура çурчĕ — районти культура вучахĕ. Культура çурчĕн ĕçне вăйлатни ĕçсыннисен культурăллă шайне ÿстерессишĕн, вĕсене Ленинпа Сталин идейисем майлă воспитани парассишĕн, коммунизмлă обществăн активлă строительсем тăвассишĕн тăрăшни пулать.

Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишĕн

Вăйлă тырпул çитĕнтерессишĕн, Пĕтĕм Союзри Ялхуçалăх выставкине хутшăнма тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешер!

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи КОЛХОЗСЕНЧЕ ÇУРАКИ ĔÇĔСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Майăн 25-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

Районсем	Çуртри акни	Йĕтĕн тата кантăр акни	Çĕрулми лартни
Чкаловски	107,8	81,3	69,8
Красноармейски	101,1	66,2	96,1
Муркаш	100,3	51,9	86,8
Етĕрне	99,5	80,9	95,4
Вăрмар	98,9	81,5	90,6
Советски	97,0	67,5	76,0
Куславкка	96,0	32,0	31,5
Шăхасан	95,8	59,3	83,7
Елчĕк	95,5	87,7	75,2
Комсомольски	95,0	64,6	80,8
Тăвай	94,9	93,8	70,9
Первомайски	93,8	75,2	66,1
Шăмăршă	93,2	41,7	50,6
Элĕк	92,5	47,2	80,1
Калинино	92,5	73,3	82,6
Куакино	92,5	87,0	67,5
Чурачăк	92,2	29,3	73,0
Хĕрлĕ Чутай	91,4	83,7	84,3
Сĕнтĕр	90,8	20,5	66,4
Пĕрчесс	90,5	76,1	62,4
Канаш	90,4	35,2	59,7
Вăрнар	90,1	48,6	84,0
Шупашкар	87,7	56,8	68,9
Сĕмĕрле	87,6	57,1	42,0
Çĕрпÿ	87,2	24,0	66,0
Улатăр	85,7	81,8	28,6
Сĕнтĕрвăрри	84,4	14,0	40,1
Ишлей	83,2	30,0	52,2
Октябрьски	82,3	16,0	59,8
Пăрачкав	81,5	80,0	65,8

Тырпул тухăçлăхне ÿстерессишĕн

ВĂРМАР. «30 лет Чувашии» колхоз пĕрлешсе пысăкланиччен районта юлса пыраканнисенчен пĕри пулнă. Ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра пурнăçлайман, пысăк тухăçлă тырпул туса илеймен.

Çак колхоз, виçĕ çул каялла пĕрлешсе пысăкланнăскер, иртнĕ çулта кашни гектартан 13—15-шер центнер тĕштырă туса илнĕ, государствăна районта чи малтан тырă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем парса татнă.

Кăçал «30 лет Чувашии» колхоз членĕсем Сталин юлташ патне янă çырура кашни гектартан 18-шар центнертан кая мар тĕштырă туса илме, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарма, колхоза организацине хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетсе пыма пысăк обязательствăсем йышăнчĕç. Колхоз çуракине лайăх хатĕрленсе тухрĕ, 10 ĕç кунĕ хушшинче пĕрчĕллĕ тырăсене, тымарçимĕçсемпе силос тумалли культурăсене акса пĕтерчĕ.

Çуракине кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерме колхоза И. Захаров юлташ ертсе пыракан трактор бригади пысăк пулăшу парать. А. Сурнаевпа А. Герасимов трактористсем «ДТ-54» тракторпа 180 гектар акрĕç. Н. Казаковпа Н. Петров трактористсем те тухăçлă ĕçлерĕç.

Колхоз пурĕ 325 гектар пĕрчĕллĕ тырă, вăл шутран тулă 100 гектар акнă, выльăх апачĕ нумай тăвас шутпа 30 гектар клевер, 13 гектар тымарçимĕç тата силос тумалли культурăсем акса хăварнă. Кĕртырри, кок-сагыз, нумай çул ÿсекен курăк калчисене пĕтĕмĕшпех апат панă, кĕрхи тырăсен калчине сÿреленĕ.

Колхоз хуçалăхне малалла тĕреклетме кăçал чылай пысăк ĕçсем тăваççĕ. Халĕ пĕр гектар çине сад, пĕр гектар çине хăмла лартрĕç, кок-сагыз акмалли лаптăка виçĕ гектара çити ÿстерне.

Энĕш çинче гидроэлектростанци тума тытăнаççĕ. Çак пысăк ĕçе тума колхоз хатĕрленсе çитнĕ ĕнтĕ: 217 кубометр йывăç, 20 тонна цемент, 1,5 тонна тимĕр турттарса килнĕ, 600 кубометр чул хатĕрленĕ, Гидроэлектростанцин проекчĕ хатĕр.

— Ĕçленĕçемĕн ĕçлес килет. Хамăр колхоза тĕреклетсе, ăна районта мала кăларатпăр,—тесе хавхаланса ĕçлеççĕ колхозлă ялăн ĕçченĕсем.

Г. МАТВЕЕВ.

Кантăр акассине хакламаççĕ

КУСЛАВККА. Кăçал районăн 150 гектар, пĕлтĕрхинчен 50 гектар ытларах, кантăр акмалла. Çав вăхăтрах районти чылай колхозсем, вăл шутра «Красная Волга», «Путь Ленина», «Новый путь», «Большевик», «Ударник» колхозсем халичченех кантăр вăрлăхĕ хатĕрлемен. Районĕпе илсен, 90 центнер, кирлĕ шутран çурри чухлĕ, вăрлăх çитмест. Çитмен вăрлăха Заготленăн Вăрмарти тата Канашри кантурĕсенчен кÿрсе килмелле.

Ялхуçалăх пайĕн колхозсене кантăр пуссисене тĕрĕс уйăрма пулăшмалла. Ялхуçалăх специалисчĕсем çакна пурнăçламаççĕ. Хăшпĕр колхозсенче кантăр акма юрăхсăр çĕр участокĕсем уйăрнă тĕслĕхсем пур. Молотов ячĕпе тăракан артельте ăна ăçта акмаллине те пĕлмеççĕ.

Районта кантăра çулсерен начар çемçетсе хатĕрленĕ çĕр çине алăпа акаççĕ. Специалистсем вара ку çитменлĕхе пĕтерме мерăсем йышăнмаççĕ.

Малта пыракансен опычĕ çакна кăтартса парать: лайăх çемçетнĕ çĕр çинче вăхăтра акса тунă кантăр пысăк тухăçлă пулать. Иртнĕ çулта «Динамо» колхозра планпа палăртниччен икĕ хут ытла кантăр вăрри туса илнĕ. Ку колхоз кăçал та техникăллă культурăсем акмалли плана районта пуринчен малтан тултарчĕ.

Ялхуçалăх пайĕпе колхоз руководителĕсен кантăр акмалли плана пĕтĕмпех тултарма халех кирлĕ мерăсем йышăнмалла, тухăçлă сÿс-кантăр туса илессишĕн тимлĕ кĕрешмелле.

Т. ИВАНОВ, (Хамăр корр.).

Ăнăçлă ĕçлеççĕ

СĔМĔРЛЕ. А. Захаровпа А. Андрюшкин юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем çуракине ăнăçлă вĕçленĕ хыççăн çĕртме тума пуçларĕç. Икĕ бригада кĕске вăхăт хушшинчех колхозсене 100 гектар ытла çĕртме туса пачĕç.

Трактористсем икĕ сменăпа ĕçлеççĕ, агротехника правилисене тĕрĕс пурнăçлаççĕ.

Бригадăсем хăйсене çирĕплетсе панă колхозсенче ирхи çĕртме сухи тумалли плана лайăх пахалăхпа, июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма пулаççĕ.

В. НАУМОВ.

Плана тултарас пулать

Муркаш районĕ техникăллă культурăсем акмалли плана çултан-çул пурнăçласа пымасть. Ку енĕпе район кăçал та кая юлнă. Майăн 25-мĕшĕ тĕлне кантăр акмалли задание 52 процент кăна пурнăçланă. Уйрăм колхозсенче халĕ те кантăр акма тытăнман.

План тăрăх «Правда» колхозăн кăçал пурĕ 36 гектар кантăр акмалла, ку таранччен пĕр гектар та акман. Колхоз председателĕ Т. Евдокимов юлташ: акма пултараймастпăр, пирĕн кантăр валли хатĕрленĕ участок çук, тесе пурăнать. «Знамя коммунизма» колхоз руководителĕсем те çавăн пек шухăшпа пурăнаççĕ, кантăр ытларах акма тăрăшмаççĕ.

Район центрĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз 53 гектар вырăнне 30 гектар кăна кантăр акнă, урăх акма шутламаççĕ. Çак колхозра председатель пулса ВКП(б) райкомĕн членĕ Е. Андреев юлташ ĕçлет. Унăн государство планĕсене пурнăçлана çĕрте пуриншĕн те примерлă пулмалла. Анчах вăл çавна ăнланмасть. Çавăнпа ĕнтĕ колхоз государство заданине пурнăçламасть.

Акă тепĕр тĕслĕх. Кăçалхи çуракинче Маленков ячĕпе тăракан колхоз руководителĕсем тулăпа пăрса йышши культурăсем тата пĕр çул ÿсекен курăксем акмалли плана тултармарĕç. Халĕ вĕсем кантăр акмасăр тăраççĕ. Колхоз председателĕ Н. Дмитриев юлташ: «Эпир хамăра кирлине пурне те акнă, урăх пирĕн çĕрĕ те çук. Кантăр вырăнне çĕлĕ акнă»,—тесе ларать. Государство дисциплинине çавăн пек пăснăшăн ăна ответ тыттарман.

Техникăллă культурăсем акас ĕçе хаклаймани çавăн пекех Хрущев ячĕпе тăракан, «Герой», Ульянов ячĕпе тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче те палăрать.

Районта кантăр акас ĕç начар пыни ялхуçалăх пайĕ тивĕçлĕ мерăсем йышăнманнинчен, ялхуçалăх специалисчĕсем кантăр акмалли задание кашни колхоз тăрăх пурнăçлассишĕн çине тăрса кĕрешменнинчен килет.

Кантăр акмалли плана кашни колхозăн пĕр пăркаланмасăр тултармалла.

П. ПАВЛОВ.

Çĕртмере

ШĂХАСАН. Кăçал МТС-ри механизаторсем кашни 15 лаша вăйлă трактора 600 гектар сухаланă чухлĕ ĕç тума, кашни 10 кун хушшинче перекетлесе хăваракан горючипе пĕр кун хушши ĕçлеме пулнăччĕ.

Çак ăмăртура А. Яковлев коммунист, А. Григорьев, И. Трофимов юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем малта пыраççĕ. Вĕсен бригадисем çураки ĕçĕсен планне кĕске вăхăтра ирттерсе тултарчĕç.

А. Яковлев юлташ ертсе пыракан бригада кĕске вăхăтрах 100 гектар ытла çĕртме турĕ. Вăл шутран вунникĕ гектарне перекетлесе хăварнă горючипе сухаланă.

Çавăн пекех И. Трофимов юлташ ертсе пыракан трактор бригади те çĕртме сухи чылай тунă.

М. ПЕТРОВ.
В. КУРОПАТКИН.

ШКУЛСЕНЧИ ЭКЗАМЕНСЕМ

Тĕрĕс ответсем

Шăнкăрав шăнкăртатрĕ. Вĕренекенсем класа кĕрсе парттăсем хушшине вырнаçрĕç. Шкул заведующийĕ, ватă учитель Ф. Макаров юлташ экзаменсем пуçланнă ятпа ачасене саламларĕ, ÿсĕмсем тума ырă сунчĕ.

Вырăс чĕлхипе диктант пуçланчĕ. Ачасем кашни сăмаха тĕплĕн шухăшласа çыраççĕ. Тăрăшса, тимлесе вĕрентни сая кайман. Кăтарши пуçламăш шкулăн 4-мĕш класĕнче вĕренекенсем малтанхи кунри экзаменра 5 ача «5» паллă, 6 ача «4» паллă илчĕç. Япăх паллă илнĕ ачасем çук. Пĕтĕм класĕпе те çак çыру ĕçĕнче 6 йăнăш кăна тунă.

Пушнарти çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренекенсем те кунĕпех хĕрÿллĕ ĕçре. Пĕр класрисем экзаменсем тытаççĕ, тепĕр класрисем—экзаменсене хатĕрленеççĕ. Экзамен пуçланнă малтанхи кун 5-мĕш класра вĕренекенсем арифметикăпа çыру ĕçĕ ирттерчĕç. Экзамена лайăх хатĕрленсе пынă, 54 вĕренекентен пĕри кăна «2» паллă илнĕ. «5» паллă илнисем вуннă, «4» паллă илнисем вунçиччĕ. Иккĕмĕш кун çак шкулти 7-мĕш класра вĕренекенсем «Шура Чекалин» темăпа изложени çырчĕç. Класри 43 вĕренекентен 16 çын «5» тата «4» паллă илнĕ. Çак кунах 6-мĕш класра арифметикăпа çыру ĕçĕ ирттернĕ. 39 вĕренекентен 21 вĕренекенĕ «5» тата «4» паллăсем илнĕ.

Районти ытти шкулсенче те экзаменсем йĕркеллĕ иртеççĕ. Экзаменсен малтанхи результачĕсем нумай шкулсенчи учительсем кăçалхи вĕренÿ çулĕнче пархатарлă ĕçлени, вĕренекенсене çирĕп те тарăн пĕлÿ пама пултарни çинчен калаççĕ.

Н. ЦВЕТКОВ.

Етĕрне районĕ.

Вуннăмĕш класрисем

Вĕренÿ çулĕ пуçланнă чухнехи митинга вĕренекенсем пурте лайăх астăваççĕ. Аслăрах классенче вĕренекенсем ун чухне Пĕтĕм Союзри мир Совечĕ чĕнсе калани çине алă пуçрĕç, вĕренÿре çĕнĕ ÿсĕмсем тума, наука никĕсĕсене тĕплĕ вĕренме сăмах пачĕç.

Ун пек чухне чĕререн хумханма кашниннех сăлтавсем пур. Шкул коллективĕ вуннăмĕш «А» класра вĕренекен Валентина Маркова миршĕн тăрăшма чĕнсе каланине уйрăмах лайăх астăвать.

Валя ашшĕ Отечественнăй вăрçă хирĕнче вилнĕ. Валя ашшĕ-амăшĕсĕр, пĕччен тăрса юлнă. Çапах та вăл вĕренме пăрахман. Совет правительстви пулăшнипе çине тăрса вĕренме тăрăшнă. Кăçал вăл 10-мĕш класра вĕреннĕ.

Экзаменра мĕнле темăсем тăрăх сочинени çырмаллине никам та—вĕрентекенсем те, вĕренекенсем те пĕлмен. Виçĕ темăна ятне пĕлтерсен вара экзамен тытакансем нумай шухăшласа тăмарĕç, хăйсем юратнă темăсене часах суйласа илчĕç.

Валентина Маркова «А. А. Фадеевăн «Çамрăк гварди» романĕнчи Олег Кошевойăн сăнарĕ» ятлă темăна йышăнчĕ. Малтанах вăл сочинени планне турĕ, шухăшсене йĕркене кĕртрĕ, унтан çырма пуçларĕ. Çитĕнсе çитни çинчен аттестат илме экзамен тытакан хĕрача хăйĕн сочиненийĕн малтанхи пайĕнче «Çамрăк гварди» роман мĕнле вăхăтра çуралса тухни, роман тĕнче литературинче пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен кĕскен, ăнланмалла çырчĕ. Хăйĕн шухăшĕсене писателĕн сăмахĕсемпе çирĕплетсе пачĕ. Унтан вăл Олег Кошевойăн сăн-сăпатне сутатрĕ, сочиненин юлашки пайĕнче Кошевой патриотăн примерĕ совет çамрăкĕсен Тăван çĕршыва юратас кăмăлне вăйлатма пулăшни çинчен çырчĕ.

Вĕренекенсем нумайăшĕ В. И. Лебедев-Кумач сăввинчи «Пирĕн совет держави пĕтĕм тĕнчен шанчăкĕ пулса тăчĕ» текен сăмахсем тăрăх сочинени çырчĕç. Вĕренекенсем аслă Сталин юлташа, Тăван çĕршыва пĕтĕм кăмăлтан мухтаса çыраççĕ.

Александр Марков хăйĕн çыру ĕçĕнче тĕнчери миллионшар ĕçсыннисем миршĕн кĕрешни çинчен, вĕсем аслă совет халăхĕпе пĕр çулпа пыни çинчен çырать. Вăл империалистла вăрçă-хурахсен ылханлă та ирсĕр ĕçĕсене, вĕсем ĕçсыннисен юнне тăкса ытларах пуйма тăрăшнине, мирлĕ халăха хирĕç урса кайса алхаснине питлет. Вĕренекен хăйĕн патриотла çыру ĕçĕнче Тăван çĕршывшăн, коммунизм строительствине хăвăртлатассишĕн чĕререн парăнса ĕçлеме пулни палăрать.

...Вуннăмĕш класра вĕренниссем пурте экзамена пычĕç. Шкулта вĕренекенсемпе пĕрле экстерн йĕркипе те экзамен тытрĕç. Вĕсем хушшинче Отечественнăй вăрçă участникĕ, «Большевик» колхоз председателĕн заместителĕ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Д. Енилин тата ытти юлташсем те пурчĕç.

Малтанхи экзамен вĕренекенсем вырăс чĕлхине тăрăшса вĕреннине кăтартса пачĕ. Вĕсем ытти экзаменсене те ăнăçлă пама, аттестат илсе, коммунизмăн аслă стройкисене ĕçлеме кайма, аслă шкулсене вĕренме кĕме ĕмĕтленеççĕ.

Н. НИКИТИН. (Хамăр корр.).

Патăрьелĕнчи вăтам шкул, Чкаловски районĕ.

Лайăх паллăсем илеççĕ

ИШЛЕЙ. Кăçал районти шкулсенче вĕренекен 4.255 ачаран 4-мĕш классенчен 759 çын, 7-мĕш классенчен 477 çын тата 10-мĕш классенчен 83 çын вĕренсе тухмалла.

Экзаменсем пур шкулсенче те тенĕ пекех йĕркеллĕ иртсе пыраççĕ. Малтанхи результатсем начар мар. Вĕренекенсем тарăн пĕлÿ илессишĕн тăрăшни уççăнах курăнать.

Ишлейри вăтам шкулта 10-мĕш классенче кăçал 51 ача вĕреннĕ, вĕсене пурне те экзамен тытма ирĕк панă. Пĕрремĕш кунĕнче сочинени çырса 30 ача «5» тата «4» паллă, ыттисем «3» паллă илчĕç.

Çак шкулти 5-мĕш «Б» тата 4-мĕш классенче те начар паллăсем илни пулмарĕ. Ку вăл Любимов учитель тата Шумиловăпа Денисова учительницăсем тăрăшса ĕçленинчен килнĕ.

Хыркассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти 4-мĕш класра вĕренекенсем вырăс чĕлхипе диктант çырса, 26 ачаран вуниккĕшĕ—«5» тата «4» паллă илнĕ.

Чурачăкри тата Анат Кĕнерти шкулсенче малтанхи экзаменсем начар мар результатсем пачĕç.

Х. ЛИСИН.
В. ЧЕРНОВ.

Ырă ĕмĕт

СĔНТĔР. Шупуçĕнчи пуçламăш шкул коллективĕ вĕренÿ çулне ăнăçлă вĕçлессишĕн кĕрешет. Тăваттăмĕш класра вĕренекенсем пурте экзамена кĕме тивĕçлĕ пулчĕç.

Малтан вырăс чĕлхипе çырса экзамен тытрĕç. Экзаменра ачасем вĕренÿ çулĕ тăршшĕнче лайăх вĕреннине кăтартса пачĕç. Вунтăвата ачаран вуннăшĕ «5» тата «4» паллăсем илчĕç. Вĕсен ырă ĕмĕчĕ— ытти предметсемпе те экзамен лайăх тытасси пулать.

Д. ВЕРШКОВ.

Дон шывĕ Атăл патнелле пырать

СТАЛИНГРАД, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Атăлпа Дон хушшинче суднăсем çÿрекен канал тунă çĕрте ĕçлекенсемшĕн савăнăçлă кунсем çитрĕç. Ĕнер кăнтăрла Донпа Атăл хушшинчи чи çÿлĕ вырăнта (шыв чиккинче) шыв çулне пÿлсе тăракан перемычкăна ватнă. Сакăн хыççăн Варваровски водохранилищĕри шыв 9-мĕш шлюза пымалли канал тăрăх юхма тытăннă. Шыв хăй чухне пĕр сехет хушшинче 20 сантиметр чухлĕ тулса пынă. Паян кăнтăрла иртни 3 сехет тĕлне шлюз хапхи патĕнче шыв шайĕ 2,5 метр ытла хăпарнă. Çав вăхăт тĕлне строительсем 9-мĕш шлюз шыв йышăнма хатĕр пулни çинчен пĕлтернĕ. Вара металран тунă пысăк хапхана уçнă. Дон шывĕ 9-мĕш шлюз патнелле юхма тытăннă. Çапла юлашки талăк хушшинче Дон шывĕ 17 километр тăршшĕ канала тулнă.

9-мĕш шлюз Атăл тайлăмĕнчи шлюзсенчен чи малтан Дон шывне йышăннă. Ун хыççăн шыв 8-мĕш шлюза кĕрет. Ку шлюза тăвакансем те Дон шывне йышăнма хатĕр пулни çинчен пĕлтернĕ.

Чапурниковски строительство районĕнче ĕçлекенсем—бетонщиксем, арматурщиксем, механизаторсем, монтажниксем, мĕнпур вăя хурса ĕçлеççĕ. Атăлпа Дон пĕрлешесси халĕ вĕсенчен килет. Ĕç кăнтăрла та, çĕрле те чарăнмасть.

Дон шывĕ Атăл патнелле пырать. Атăл шывĕ те канал тăрăх куçма тытăннă. Пĕрремĕш шлюз патне аял енчен пымалли вырăна Атăлтан шыв тултарма пуçланă. Çывăх кунсенчех икĕ аслă юхан шыв пĕр-пĕринпе пĕрлешеççĕ, канал тăрăх пăрахутсем çÿреме тытăнаççĕ.

Торф кăларакансен çитĕнĕвĕ

Атăл леш енчи торф предприятийĕнче ĕçлекенсем хушшинче кăçалхи сезон планне ирттерсе тултарассишĕн социализмлă ăмăрту сарăлса пырать.

Торф кăларас ĕçре малта пыракансен ĕç опычĕсемпе туллин усă курса, нумай бригадăсем пысăк çитĕнÿсем турĕç. Норма тăрăх сменăра 30.500 торф кирпĕчĕ кăларса хатĕрлемелле пулсан, малта пыракан бригадăсем 40 пин ытла торф кирпĕчĕ кăларса хатĕрлеççĕ.

Н. АЛЕКСЕЕВ.

Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки США, Англи тата Франци Правительствисене панă нотăсем

Кăçалхи майăн 13-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин США-и, Великобританин тата Франци Мускаври посольствисенчен США, Великобритани тата Франци Правительствисен пĕр пек сырса янă нотăсем илнĕ. Вĕсене Совет Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас пирки кăçалхи апрелĕн 9-мĕшĕнче панă нотăна ответлесе çырнă.

Майăн 24-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви США, Великобритани тата Франци посольствисене Совет Правительстви хăй ответлесе çырнă нотăна ярса панă.

Аялараха США Правительствин 1952 çулхи майăн 13-мĕшĕнчи нотин текстне тата ăна ответлесе Совет Правительстви 1952 çулхи майăн 24-мĕшĕнче панă нота текстне пичетлетпĕр.

США Правительстви 1952 çулхи майăн 13-мĕшĕнче панă нота

«Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ĕçĕсен Вăхăтлăх Поверённăйĕ Советла Социализмлă Республикăсен Союзĕн Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Министрне хисеплени çинчен калать, хăйĕн Правительстви хушнă тăрăх çакăн çинчен пĕлтерет:

1. Совет Правительстви апрелĕн 9-мĕшĕнче панă нотăна ответлесе, Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви Германи пĕрлĕхĕ, Пĕтĕм Германин ирĕклĕ правительствине суйлас тата çав правительствăпа мирлĕ договор тăвас пирки çакăн пек асăрхаттарусем тума шутлать. Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствин политики, ĕлĕкхи пекех, асăннă тĕллевсене пĕрлĕхпе ирĕклĕх тата мирпе хăрушсăрлăх туса хума май паракан условисене пурнăçлассишĕн тăнинче пулать.

2. Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви ку ыйтусем тăрăх Совет Правительствипе калаçусем пуçлама хатĕр тата Совет Правительстви халиченхи пек усăсăр тавлашусем пуласскинчен пăрăнма шут тытни уççăн палăрсанах çав ĕçе пуçлама шутлать. Анчах Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствин, Пĕрлешӳллĕ Королевствăпа Франци Правительствисен тата Совет Правительствин малтан калаçусене мĕнле йĕркепе иртермелли тата унта мĕнле ыйтусем пăхса тухмалли çинчен усăмлă калаçса татăлас пулать. Ĕç ăнăçлă пултăр тата вăраха ан кайтăр тесен, ăна иртерме тивĕçлĕн хатĕрленни кирлĕ. Çавăн пек кирек мĕнле калаçăва та ăнăçлă иртерме, Совет Правительстви шучĕпе, мĕнле майсемпе усă курмалли çинчен Совет Правительствин апрелĕн 9-мĕшĕнчи нотинче çĕнĕрен тĕплĕн çутатса пани çук вара.

3. Совет Правительстви хăйĕн юлашки нотинче халĕ Германие «державăсен нимĕнле ушкăнне те, мире юратакан кирек хăш государствăна хирĕçле ушкăнне те» кĕртмелле мар йĕрке тумалла тесе условие лартать. Германие Пĕрлешнĕ Нацисен членне кĕртме шутлани, паллах ĕнтĕ, çавăн пек кирек мĕнле условине те кирлĕ мар услови туса хурать. Тем пулсан та, Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви Германие ытти государствăсен пĕрлешĕвне кĕме чаракан, мирлĕ договор çине алă пуснисенчен пĕр енĕ хăйĕн шучĕпе «мире юратакан кирек хăш государствăна хирĕçле ушкăн» тесе шутлакан пĕрлешĕве кĕме чаракан нимĕнле положение те йышăнма пултараймасть. Вăл Германие ирĕклĕ тата пĕр тан праваллă нацие тивĕçлĕ тĕп правасăр—ытти нацисемпе мирлĕ тĕллевсемпе пĕрлешмелли правасăр хăварма килĕшмест. Вăл Совет Правительстви те Германин хăйне хӳтĕлемелли килĕшӳсем тумалли право пулмаллине хирĕç калама пултараймасть пулĕ, тесе шутлать.

4. Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви мартăн 25-мĕшĕнчи нотăра çапла каланăччĕ: вăл Хĕвеланăç Европăри ирĕклĕ государствăсем, çав шутра Германи федеральнăй республики те, Европăн пĕрлешсе тăмалли обществине тума тăрăшнине, çапла майпа çĕнĕ самана—тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕринпе хирĕçлемелле мар, шанмасăр тăни пулмалла мар, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнмалли самана—пуçлама тăрăшса тăвакан ĕçсене пурнăçлама пур енчен те пулăшать. Европăн пĕрлешсе тăмалли обществине, унта Германие те хутшăнтарса, тунине Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви ырлать. Европăна пайланă пекех, Германие те пайланă. Европа пĕрлĕхне тăвас политика Совет Союзĕн тата мире хӳтĕлес политика тытса пыракан кирек хăш çĕршывăн интересĕсемшĕн те хăрушлăх туса хумасть. Çавăнпа та Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви çав политикăна пурнăçлас ĕçре пулăшса пыма пăрахмасть. Çав политика мир тумалли чăн-чăн çул пулса тăнине вăл халĕ нихçанхинчен ытларах ĕненет.

5. Çавăн пек килĕштерсе ĕçлессине кальхи чикĕсенчен аннăрах сарма май килменшĕн Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви ответ тытмасть. Вăл халиченхи пекех йывăрлăхсене пĕчĕклетес тата хальхи пек пайланса тăнине пĕтерес тĕлĕшпе паракан практикăллă тата конкретлă кирек мĕнле сĕнӳсене те тӳрĕ кăмăлпа тата усăллă ĕç тăвас шутпа пăхса тухма хатĕр.

6. Ирĕклĕ суйлавсем иртернипе туса хунă тата мирлĕ договор тăвасси çинчен сӳтсе явма тулли ирĕклĕхпе усă курма пултаракан пĕтĕмĕшлĕ Германи правительстви пулсан çеç Германипе тумалли мирлĕ договора хатĕрлеме май килет. Çавăнпа та хальхи вăхăтра Германипе тумалли мирлĕ договор мĕнле пулассии çинчен калаçусем иртерме май çук. Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви Совет Правительствин хăшпĕр сĕнĕвĕсем пирки, уйрăмах Потсдамри Протоколта территори çинчен йышăннă постановлени тĕлĕшпе йăнăш ăнлантарса панă пирки тата, Совет Правительстви Германие яланлăхах Хĕвеланăç Европăран уйăрса тăмалла тума, ăна хăйне хӳтĕлес ĕçре хăйĕн нацилле хĕçпăшаллă вăйĕсемпе çеç усă курмашкăн ирĕк памалла тума шутланă пирки хăйĕн шухăшĕсене каласа панăччĕ ĕнтĕ. Совет сĕнĕвĕсем Германие хăйĕн тĕнчери çĕршывсен пĕрлешĕвĕсене кĕмелли правипе усă курма яланлăхах чаракан йĕрке туса хурассине пĕлтерĕччĕç, çакă Европа центрĕнче яланах йывăрлăх тата шанмалăх пулас лару-тăрăва туса хума пултарĕччĕ.

7. Ирĕклĕ суйлавсем иртернипе туса хунă пĕтĕмĕшлĕ Германи правительстви хăй те ирĕклĕ пулмалла. Вăл çавăн пек ирĕклĕхпе мирлĕ договор хатĕрличчен те, калаçусем иртернипе мирлĕ договор хатĕрленĕ хыççăн та усă курма пултармалли йĕрке туни кирлĕ. Вăл халăхăн чăн-чăн представителĕсем кĕнĕ правительство пултăр, çĕнĕрен пĕрлештернĕ Германи правительстви шутланса, хăйĕн çине обязательствăсем илме, мирлĕ договор çинчен сӳтсе явнă чухне пур ĕçсене те тума пултартăр. Çак ирĕклĕх ыйтăвĕ суйлавсем иртерес ыйтусемпе тачă çыхăнса тăрать. Ку ыйту пирки Совет Правительстви хăйĕн шухăшĕсем çинчен пĕлтермерĕ-ха. Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствин уйрăмах çакна ыйтас пулать: Совет правительстви ирĕклĕ суйлавсем иртернипе туса хунă пĕтĕмĕшле Германи правительствин мирлĕ договор тăвиччен тăватă держава контроллесе тăнипе ĕçлемелле тесе шутлать-и е Совет Правительстви пĕтĕмĕшлĕ Германи правительствин ирĕклĕ ĕçлеме майсем тата правительствăна тивĕçлĕ полномочисем пулмаллипе килĕшет-и?

8. Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствин çакна палăртма телей пулчĕ: Совет Правительстви халĕ пĕтĕм Германире ирĕклĕ суйлавсем иртерессине, принцип енчен илсен, килĕшет. Анчах Германин пур пайĕсенче те ирĕклĕ суйлавсем иртерме юрăхлă условисем пулнипе, çав условисем сасăланă кун çеç мар, унччен те, тата кайран та пулнипе кăна çавăн пек суйлавсене иртерме май килĕ. Çавăнпа та асăннă условисене тăвас тĕлĕшпе ĕçлесси пĕрремĕш утăм пулса тăмалла. Унсăрăн ку ĕçе малалла яма май килмĕ. Юлашки çулсенче Германин хĕвелтухăçĕнчи пайĕ Германи аталанăвĕн тĕп çул-йĕрĕнчен ытларах та ытларах аяккалла пăрăнать. Çакă вара суйлавччен малтан условисене нихăш майлă та пулмасăр йĕрлесе пĕлме хушакан тĕп сăлтавсенчен пĕри пулса тăрать.

9. Анчах Совет Правительстви Тĕнчери çĕршывсен комиссийĕ, Пĕрлешнĕ Нацисен Генеральнăй Ассамблейи туса хунăскер, пĕтĕм Германипех çавăн пек йĕрлесе пĕлес ĕçе тăвассипе килĕшмест. Вăл хăй килĕшменнине çакăн пек ăнлантарса парать: ун пек йĕрлесе пĕлни Пĕрлешнĕ Нацисен Уставĕн 107-мĕш статьипе килĕшӳллĕ мар тесе шутлать, çав Статьяна хăйне майлă ăнланать. Анчах ку Статьяра çапла каланă:

«Çак Устав тĕнчери иккĕмĕш вăрçа пула тунă ĕçсене, йышăнса çирĕплетнисене нимĕн енчен те законлă мар тесе шутлама пултараймасть, тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче кирек хăш государствăн тăшманĕ пулнă кирек мĕнле государство, çак Устава алă пуснă государство тĕлĕшпе те тунă çавăн пек ĕçсемшĕн ответлăха хăйсем тытакан правительствăсен ĕçĕсене законлă мар тесе шутлама май памасть тата çавăн пек ĕçсем тума чармасть».

Ку сăмахсем Пĕрлешнĕ нацисене Германи ĕçĕсем çинчен пăхса тухма нимĕн чухлĕ те чармаççĕ. Çавăн пек ăнлантарса панине Пĕрлешнĕ Нацисен организацийĕн Генеральнăй Ассамблейин ытларахăшĕ ырланăччĕ. Анчах Совет Правительстви Устава йăнăш ăнланса каласа панине шута илес пулсан та, çавăн чухне те тăватă державăна Пĕрлешнĕ нацисен комиссине чăннипех те ирĕклĕ суйлавсем иртерме май пуррине пĕтĕм Германире йĕрлесе пĕлмешкĕн усă курма нимĕн те чăрмантармасть.

10. Куна вырăнне Совет Правительстви çавăн пек йĕрлесе пĕлес ĕçшĕн ответлăха оккупацилесе тăракан тăватă держава тунă Комиссие çине хумалла текен положени кăларса тăратать. Çав сĕнӳ тăрăх ку ĕçе нихăш майлă та пулмасăр йĕрлесе пĕлес шанчăк пуррине Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви туйса иличчĕ, унăн çавăн пек органта камсем пуласси çинчен тата ăна мĕнле ĕçсем тума хушасси çинчен пĕлме кирлĕччĕ. Германишĕн тӳрремĕнех ответлă пулса тăракан членсенчен кăна тунă Комисси пĕр вăхăтрах судья та, интересленекен енĕ те пулĕччĕ. Тăватă держава Германие пĕрле контроллесе тăнă тапхăрти опыт Комисси хăйĕн ĕçне усăллă решени йышăнасси патне илсе çитерес сукки çинчен калать. Çакă вара суйлавсем иртерес ĕç чылай вăраха кайассси патне илсе çитерĕччĕ. Тăватă державăн Комиссине уйăрнине тăватă держава Германие контроллесе тăрас йĕркене тепĕр хут пуçарас тĕлĕшпе тунă ĕç пек [illegible] пултарĕç. Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви вара çак факта шута илмесĕр тăма пултараймасть. Çавăн пек Комисси уйăрни каялла утăм тунине пĕлтерĕччĕ, ку вара Федеральнăй республикăра конституци енĕпе тунă улшăнусемпе килĕшсе тăмĕччĕ.

11. Çак сăлтава пула Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви Пĕрлешнĕ Нацисен Комиссине маларах хурать. Ку комисси пур ĕнтĕ, унăн мĕн тумаллине палăртнă, вăл пĕр тăхтаса тăмасăрах ĕçлеме тытăнма пултарать. Çавăн пек Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви чăннипех те ирĕклĕ суйлавсем иртерме пĕтĕм Германи территорийĕнче условисем пуррипе çуккине пĕлме ытти кирек мĕнле майсене те тĕпчесе вĕренме хатĕр. Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительстви, Пĕрлешнĕ Королевствăпа Франци Правительствисемпе килĕштерсе, Германин Федеральнăй Правительствипе тата Германин Берлинри власĕсемпе канашланă хыççăн, çакăн пек сĕнӳсем тăратать:

(I) Нихăш майлă та пулман комиссин Германири совет зонинче, çавăн пекех тата Германи федеральнăй республикинче тата Берлинри мĕнпур секторсенче ирĕклĕ суйлавсем иртерме кирлĕ условисем пуррипе çуккине халех палăртас пулать, çук пулсан, ун пек условисем туса пама Германире ответлă пулса тăракан тăватă державăна пăхса тухма сĕнес пулать. Тăватă державăн çакнашкал Комиссине Германи федеральнăй республикинче, совет зонинче тата Берлинăн мĕнпур секторĕсенче тĕрĕслесе тухма кирлĕ условисем туса памалла. Хĕвеланăçĕнчи виçĕ держава тата Германи федеральнăй республикин Правительстви çакăн [illegible] тума хатĕр [illegible] çинчен пĕлтерĕç ĕнтĕ.

(II) Çакă тĕллев валли тăватă державăн [illegible] нацисем туса хунă Комиссипе усă курмалла. Çакă вăл ĕçе хăвăрт тумалли тата практикăллă май пулса тăрать пулмалла.

(III) Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви (II)-мĕш пунктра палăртнă процедурăна мала хурать пулсан та, вăл тĕрĕслесе тухас тĕлĕшпе нихăш майлă та пулман Комисси пирки Совет Правительстви сĕнме пултаракан ытти кирек мĕнле практикăллă тата конкретлă сĕнӳсене те пăхса тухма хатĕр, анчах кунта пĕр услови кирлĕ—çав сĕнӳсем пĕтĕм Германире ирĕклĕ суйлавсем хăвăртрах иртерме пулăшмалла.

(IV) Çакнашкал нихăш майлă та пулман Комисси доклад хатĕрлесенех Пĕрлешӳллĕ королевстви, Пĕрлешӳллĕ Штатсем, Франци тата Совет Союзĕ Правительствисен представителĕсем çак ыйтусем тĕлĕшпе килĕшӳ тăвас шутпа ăна пăхса тухма пухăнассĕ:

а) пĕтĕм Германире çитес вăхăтра ирĕклĕ суйлавсем иртересси çинчен,—кунта, кирлĕ пулсан, тивĕçлĕ условисем тумалли ыйтăва та кĕртес пулать, тата

б) тăватă державăн çакнашкал ирĕклĕ суйлавсем хыççăн туса хунă пĕтĕмĕшле Германи правительстви мирлĕ договор вăя кĕречченхи тапхăр хушшинче хăйĕн ĕçĕнче кирлĕ ирĕклĕхпе усă курать, тесе шантарса калас пулать».

Совет Правительстви 1952 çулхи майăн 24-мĕшĕнче панă нота

США Правительстви кăçалхи майăн 13-мĕшĕнче панă нота пирки Совет Правительстви çакăн çинчен пĕлтерме кирлĕ тесе шутлать:

1. Германи ыйтăвне халех татса пама кирли çинчен тата хĕвеланăçĕнчи державăсем çак ыйту тăрăх нотăсем çырса вăхăта тăсни çинчен. Совет Правительстви кăçалхи мартăн 10-мĕшĕнче панă нотăра США, Великобритани тата Франци Правительствисене Германипе мирлĕ договор тăвасси çинчен тата пĕтĕмĕшле Германи правительстви туса хурасси çинчен тăракан ыйтăва пĕрле сӳтсе явма сĕнчĕ. Германипе мирлĕ договор тума хатĕрленес ĕçе çăмăллатас тата хăвăртлатас тесе Совет Правительстви хăй енчен çак договорăн проектне тăратрĕ, çакăнпа пĕрлех вăл çак ыйту тăрăх пулма пултаракан ытти сĕнӳсене те пăхса тухма хатĕр тăни çинчен пĕлтерчĕ. Совет правительстви çак ыйтăва вăраха хăвармасăр татса пама кирлĕ тесе шутланă тата шутлать, вăл ку тĕлĕшпе Европăра мире тĕреклетес тата Германи халăхĕн законлă нацилле ыйтăвĕсене тивĕçтерес интересене шута илет.

США Правительстви мартăн 25-мĕшĕнче панă ответлă нотăра пĕтĕмĕшлĕ Германи правительстви туса хурас ыйту пирки Германире пĕтĕмĕшлĕ суйлавсем иртерме кирлĕ условисене тĕрĕслесе тухасси çинчен сĕнӳ тăратнă май, Совет Правительстви апрелĕн 9-мĕшĕнче панă нотăра çак сĕнӳпе килĕшрĕ, анчах та вăл тĕрĕслес ĕçе Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн Комиссийĕ мар,—мĕншĕн тесен Германи тĕлĕшĕнчен мирлĕ майпа татса памалли ыйтусем çак Комиссин ĕçĕ мар,—Германире оккупаци функцине туса пыракан тăватă державăн нихăш майлă та пулман Комиссийĕн туса иртермелле тесе пĕлтерчĕ. Çакăнпа пĕрлех Совет Правительстви США Правительствине, çавăн пекех тата Великобританипе Франци Правительствисене иккĕмĕш хут Германипе мирлĕ договор тăвас ĕçе çавăн пекех тата Германие пĕрлештересси çинчен тата пĕтĕмĕшле Германи правительстви туса хурасси çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухассине вăраха хăвармалла мар тесе сĕнчĕ. Апла пулсан та, Совет правительстви Германире пĕтĕмĕшлĕ ирĕклĕ суйлавсем иртерме кирлĕ условисем пулнипе тĕрĕслесе тухасси çинчен США Правительствин сĕнĕвне йышăнчĕ пулсан та, Совет Правительстви тăватă держава килĕшнĕ тăрăх çакăн пек тĕрĕслӳ иртерме Комисси тăвасси çинчен панă сĕнӳ асăннă Комисси ĕçĕсене объективлă тата нихăш майлă та пулмалла мар тăвать пулсан та, США Правительстви майăн 13-мĕшĕнче панă нота кăтартнă тăрăх, Германипе мирлĕ договор тăвас тата Германие пĕрлештерес ыйтăва каллех паллă мар вăхăта хăвараççĕ. Асăннă нотăран çакă курăнать: США Правительстви юлашкинчен тăватă держава çак ыйтусене вăраха хăвармасăр сӳтсе явма тытăнассипе те килĕшмест.

Куна вырăнне США Правительстви хăйĕн майăн 13-мĕшĕнчи нотинче чылай çĕнĕ условисем—малтанлăха килĕшмелли условисем кăларса тăратрĕ. Çак условисене вăл мартăн 25-мĕшĕнчи нотăра кăларса тăратман, халĕ те вăл çак условисем çинчен тӳрех калаçусем тытăначчен малтан нотăсем çырнипе каласса татăлма сĕнет. Çавăн пек, США Правительстви майăн 13-мĕшĕнче панă нотăра калаçусем пуçланиччен малтан «калаçусем мĕнле пулмалли çинчен тата пăхса тухмалли тĕп ыйтусем çинчен» калаçса татăлма, çавăн пекех тата Германире пĕтĕмĕшлĕ суйлавсем иртерме кирлĕ условисене тĕрĕслес тĕлĕшпе ĕçлекен Комисси йышĕпе унăн ĕçĕсем çинчен малалла та нотăсем çырса калаçса татăлма сĕнет.

Çак фактсем вĕсем пурте США Правительстви Германипе мирлĕ договор тăвас ĕçе тата Германие пĕрлештерес, пĕтĕмĕшле Германи правительстви туса хурас ыйтăва татса парассине çаплах нумай вăхăта хăварса пыни çинчен калаççĕ. США Правительстви майăн 13-мĕшĕнче панă нотăра тăватă держава хушшинче тӳрех калаçусем пуçлас тата вĕсем Германипе тумалли мирлĕ договора тата çакăнпа çыхăнса тăракан ытти ыйтусене пĕрле пăхса тухма тытăнас вырăнне нотăсем ярса илессине тăсас шутпа çĕнĕрен чылай ыйтусем кăларса тăратать, çав вăхăтрах нотăсем ярса илесси ахаль те темиçе уйăха тăсăлать ĕнтĕ.

Ĕçсем çакăн пек килсе тухнă чухне Германире те, тата унăн тулашĕнче те США Правительстви тĕрĕссипе Германипе мирлĕ договор тума тăрăшмасть. Германи пайланса тăнине пĕтерме тăрăшмасть текен шухăш сарăлмасăр тăма пултараймасть. Мирлĕ договор тумасăр тата Германие пĕрлештермесĕр никама пăхăнман, тулли праваллă Германи государстви туса хума çук. Никама пăхăнман тата тулли праваллă Германи государствине туса хурасси вăл мĕнпур Германи халăхĕн чăн-чăн ирĕкне палăртса тăрать.

2. Хĕвеланăç держависем Хĕвеланăç Германипе сепаратнăй килĕшӳсем туни çинчен тата вĕсем Германипе мирлĕ договор тăвассинчен пăрăнса юлма хăтланни çинчен. Совет Правительстви çакăн çинчен уйрăмах асăрхаттарма кирлĕ тесе шутлать: США Правительстви нотăсем çырса хăтланнипе пĕр вăхăтрах, Великобритани тата Франци Правительствисемпе пĕрле, Хĕвеланăç Германири Бонн правительствипе «пĕтĕмĕшлĕ» текен договор тăвасси çинчен сепаратнăй калаçусем иртерет. Тĕрĕссипе ку вăл нимĕнле «пĕтĕмĕшле» договор та мар, сепаратнăй договор кăна, халăха улталас тесе кăна ăна «пĕтĕмĕшле» договор тенĕ. Çапла ĕнтĕ Потсдамри килĕшĕве сĕмсĕррĕн пăсаççĕ. Çак килĕшӳ тăрăх Германипе мирлĕ договор хатĕрлесси тăватă держава—США, Великобритани, Франци тата СССР çинче тăрать.

Бонн правительствипе иртерекен калаçусем вăрттăн пыраççĕ пулсан та, çак сепаратнăй килĕшĕвĕн тулли текстне ку таранччен пичетлесе кăларман пулсан та, хаçатсем пĕлтернисенчен çав сепаратнăй договор мĕн çинчен калани паллă пулса тăчĕ ĕнтĕ. Çаксенчен акă мĕн курăнать: США, Великобритани тата Франци Правительствисем хатĕрленĕ тăрăх Хĕвеланăç Германипе тунă сепаратнăй договор пĕрре те Хĕвеланăç Германие хăйне ирĕклĕ тата никама пăхăнманлăх парас тĕллев лартмасть. Оккупаци статутне ячĕшĕн пăрахăçа кăларнипе пĕрлех, çак договор чăн-чăн çар оккупацине çаплипех хăварать, Хĕвеланăç Германие США правительстви, çавăн пекех Великобританипе Франци Правительствисем тĕлĕшĕнчен пăхăнса тăракан çĕршыв туса хăварать.

Çавăнпа пĕрлех, США, Великобритани тата Франци Правительствисем Хĕвеланăç Германипе асăннă сепаратнăй договора тунипе Германин гитлерла генералсем пуç пулса тăракан çарне çĕнĕрен пухассине уççăн туса пыракан ĕç шутламалла тăваççĕ, çакă вара Хĕвеланăç Германин агрессиллĕ милитаризмне çĕнĕрен çĕклентермелли çула уçса парассине пĕлтерет. Чăннипе çав договор вăл США, Великобритани тата Франци Хĕвеланăç Германи правительствипе уççăнах çар союз туни пулса тăрать, вăл пулăшнипе Бонри правительство Германи халăхне çĕнĕ вăрçă хатĕрлеме хутшăнтарать.

Çавăнпа пĕрлех, США, Великобритани тата Франци Правительствисем Хĕвеланăç Германие хăйсем тăвакан «Европăна пĕрлешсе хӳтĕлемелли общество» текенскерне кĕртме тăрăшаççĕ. Ку общество Францие, Хĕвеланăç Германие, Италие, Бельгие, Голландие тата Люксембурга пĕрлештерсе тăракан ушкăн пулса тăмалла. Çак хăйне хăй «Европăн пĕрлешсе тăмалли обществи» тесе ят панă ушкăн Çурçĕр Атлантика блокĕн пĕр пайĕ шутланмалла, «Европа çарĕ» текенскерне тумалла, унта хальхи вăхăтра Хĕвеланăç Германире çĕнĕрен пухакан çар та кĕмелле. «Европăн пĕрлешсе тăмалли обществине» тата «Европа çарне» тунин тĕллевĕ Хĕвеланăç Германи милитаризмне çĕнĕрен çĕклентерпине уççăн туса пырассинче çеç мар, чăннипе вара çак ĕçе халĕ туса пыраççĕ ĕнтĕ, тата Хĕвеланăç Германие агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика блокне кĕртессинче те пулать.

Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, шăпах та юлашки вăхăтра США Правительстви Хĕвеланăç Германипе сӳлте асăннă сепаратнăй договора тăвас ĕçе тата Хĕвеланăç Германие «Европăн пĕрлешсе тăмалли обществине» кĕртес ĕçе хăвăртлатма пур майсемпе те хыттă тăрăшать. Çапла майпа Германин пĕр пайне Германин тепĕр пайĕнчен таткăланах уйăрма кăна мар, вĕсене пĕр-пĕрне хирĕç тăратма тăрăшаççĕ. Çакă вăл США Правительстви Германие пĕрлештересшĕн мар тата Германипе мирлĕ договор тăвасшăн мар пулнине пĕлтерет. Çакă вăл США Правительстви сепаратнăй çĕнĕ килĕшӳсем тунипе Хĕвеланăç Германие тата Хĕвеланăç Германин çĕнĕрен пухакан çарне Çурçĕр Атлантика блокĕнчи державăсемпе халиченхинчен те çирĕпрех çыхăнтарма тăрăшнине пĕлтерет. Çакă вара Европа мирлĕн малалла аталанса пырассине хирĕçле ĕç туни пулать.

Çаксем вара акă мĕн çинчен калаççĕ: хальхи вăхăтра Хĕвеланăç Германире власра тăракансемпе, иртнĕ вăрçăра парăнтарнăшăн тавăрма ĕмĕтленекен правительсемпе Çурçĕр Атлантика блокĕнчи державăсем хушшинче пĕр-пĕринпе кавар тăвасси çинчен калаçусем пыраççĕ. Аденауэрăн Бонри правительствин, Европăра çĕнĕ вăрçă пуçарма хатĕрлекен правительствăн, иртнĕ вăрçăра парăнтарнăшăн тавăрас ĕмĕчĕсене хӳтĕлеме килĕшнĕ условисем тăрăх кăна çавăн пек кавар тума пулать. Халĕ Хĕвеланăç Германире фашистла-гитлерла генералсем пуç пулса тăракан çара çĕнĕрен пухни Германири иртнĕ вăрçăра парăнтарнăшăн тавăрма ĕмĕтленекенсен агрессиллĕ тĕллевĕсене пурнăçлама кăна усăллă пулма пултарать. Тепĕр енчен—Хĕвеланăç Германин çавăн пек çарне «Европа çарĕ» текенскерне кĕртни, çапла вара, ăна Çурçĕр Атлантика блокĕн çарне те кĕртни Çурçĕр Атлантика тăрăхĕнчи çĕршывсен пĕтĕм ушкăнĕ агрессиллĕ блок пулнине тата ытларах кăтартса парать.

Çак фактсене пĕлсе тăрса, хальхи вăхăтра тума хатĕрленекен «Европăн пĕрлешсе тăмалли обществи» тата «Европа çарĕ», Америкăн майăн 13-мĕшĕнчи нотинче каланă пек, «мир тумалли çул-йĕр» пулнине никам та ĕненме пултараймасть. Çурçĕр Атлантика блокĕпе Аденауэр правительстви тăвакан кавар чăн-чăн шухăшĕ Çурçĕр Атлантика тăрăхĕнчи державăсен ушкăнĕ, халĕ Германири иртнĕ вăрçăра парăнтарнăшăн тавăрма ĕмĕтленекен çынсемпе—Европăри чи агрессиллĕ шухăшлă çынсемпе—тӳрремĕнех пĕрлешме тăрăшакан ушкăнĕ ытларах та ытларах агрессиллĕ пулса пынинче палăрса тăрать.

Хĕвеланăç Германин Бонри правительствипе сӳлте асăннă йышши сепаратнăй договор е «Европăн пĕрлешсе тăмалли обществи» çинчен килĕшӳ тунипе Германин çав пайĕн, хăйĕн çине çĕнĕ обязательствăсем илмелле пулать, ăна оккупаци держависене тата ытларах пăхăнтарать, Германин хĕвелтухăçĕнчи пайĕпе пĕрлешессинче çĕнĕ чăрмавсем туса хурать. Германин хĕвелтухăçĕнчи пайĕ вара çавăн пек обязательствăсемпе çыхăнман, вăл Германи нацине пĕрлештерме, пĕрлĕхлĕ, никама пăхăнман, демократиллĕ тата мире юратакан государство тума пулăшакан условисенче малалла аталанса пырать. США правительстви Хĕвеланăç Германипе сӳлте асăннă сепаратнăй килĕшӳсене мĕнле те пулин хăвăртрах тума тăрăшни, çав вăхăтрах Германипе мирлĕ договор тăвасси тата Германие пĕрлештересси çинчен калаçусем пуçлама çĕнĕрен те çĕнĕрен тăхтасси вара малтан ĕçсене тăвассине, кайран тин вĕсем çинчен Германи халăхĕ тавçăрса илессине, Германи халăхне Хĕвеланăç Германие çĕнĕрен милитаризацилени, оккупаци çарĕсене Хĕвеланăç Германире хăвармалла тунă факт умне тăратассине, Германипе мирлĕ договор тăвас тата Германие пĕрлештерес çул çинче хальхи вăхăтра пĕтерме йывăр чăрмавсем кăларса тăратассине пĕлтерет.

Анчах, пĕр енчен, Германипе мирлĕ договор тума тата Германие пĕрлештерме кирли çинчен калани, çав вăхăтрах, тепĕр енчен—Германипе мирлĕ договор тăвас тата Германие çĕнĕрен пĕр государство туса хурас ĕçе йывăрлатма тата чăрмантарма пур майсемпе те тăрăшни пĕр-пĕринпе çыхăнса тăмаççĕ. Ку вара çавăн пек державăсен икĕпитлĕ политикине пачах шанма пăрахасси патне илсе пырать тата Германи халăхĕн мирлĕ договор тума тата Германие наци тĕлĕшĕнчен пĕрлештерме çĕнĕ çул шырама тивет.

3. Совет правительствин сĕнĕвĕ, Германипе мирлĕ договор тăвас ыйтура, Германие пĕрлештересси тата Пĕтĕмĕшлĕ Германи правительствине туса хурасси çинчен тăракан ыйтура шухăшсем ăрасна пулин те, Совет Правительстви тепĕр хут США Правительствине, çавăн пекех Великобританипе Франци Правительствисене çав ыйтусене пĕрле сӳтсе явма сĕнет, çак ĕçре текех тăхтаса тăни пулмалла мар.

Çак ыйтусене малашне те нотăсем парса илес йĕркепе пăхса тухни тӳрремĕнех калаçнă чухне пулмалли результатсене пама пултараймасть, килĕшӳ тăвас ĕçе кăткăслатма кăна пултарать. Çавăнпа пĕрлех, Германипе мирлĕ договор тăвасси тата Германие пĕрлештересси çинчен тăракан ыйтăва татса парас ĕçе малалла вăраха тăсса пынă пирки Германи халăхĕ хушшинче законлă йĕркепе кăмăлсăрлăх пуçланма пултарать; ку ĕçе, çавăн пек вăраха ярса пыни Германипе унăн кӳршисем пулса тăракан государствăсем хушшинче йĕркеллĕ тата çирĕп çыхăнусем тăвас интересене тата пĕтĕмĕшле мире тĕреклетес интересене хирĕç пыни çинчен калама та кирлĕ мар ĕнтĕ.

Совет Правительстви çапла сĕнсе, акă çакна асра тытать: Германипе тумалли мирлĕ договора хатĕрленĕ чухне СССР Правительствин те, çавăн пекех США, Великобритани тата Франци Правительствисен те, Потсдамра йышăннă килĕшӳри постановленисем тăрăх, сăмахран Германи чиккисем çинчен йышăннă постановлени тăрăх, ĕçлемелле, кун пирки Совет Правительстви хăйĕн апрелĕн 9-мĕшĕнчи нотинчех каланăччĕ.

Пĕтĕмĕшлĕ Германи Правительствипе унăн полномочийĕсем çинчен калас пулсан, паллах ĕнтĕ, ку Правительствăн та Потсдамри постановленисем тăрăх ĕçлес пулать, мирлĕ договор тунă хыççăн унăн мирлĕ договорти постановленисем тăрăх ĕçлемелле, ку мирлĕ договор Европăра çирĕп мир тума пулăшмалла. Совет правительстви çапла сĕнсе, акă мĕнле шутлать: Германи халăхĕн çĕршыва хӳтĕлеме кирлĕ хăйĕн нацилле хĕçпăшаллă вăйĕсене тытса усрама никам тĕкĕнмелле мар право пур; унсăрăн Пĕтĕмĕшлĕ Германи Правительствин полномочийĕсем çинчен тăракан ыйтăва тĕрĕс тата кирлĕ пек татса пама май çук.

Германипе мирлĕ договор тăвасси çинчен тата Пĕтĕм Германи Правительствине туса хурасси çинчен тӳрремĕнех калаçусем иртерме пĕр тăхтамасăр пуçăнма сĕнсе, Совет правительстви тата çакна шута илет: Германин пĕр-пĕр пайĕ ытти государствăсен правительствисем тунă кирек мĕнле сепаратнăй килĕшӳре илнĕ обязательствăсене те Пĕтĕмĕшлĕ Германи Правительстви хăйĕн çине илме пултараймасть. Мирлĕ договор çине алă пуснă Пĕтĕмĕшлĕ Германи Правительствин ытти никама пăхăнман, суверэннăй государствăсен мĕнле правасем пур, çавăн пек правасем пурте пулмалла.

Çакăн пек нотăсем СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви Великобританипе Франци посольствисене те ярса панă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Суту-илŭ работникĕсене вĕрентсе воспитани парасси çинчен

(ВКП(б) райкомĕсен пленумĕсенчен)

ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕн пленумĕ районта суту-илŭ ĕçĕ мĕнле тăни тата ăна лайăхлатмалли майсем çинчен райком секретарĕ Г. Алексеев юлташ тунă доклада сÿтсе яврĕ.

Ĕççыннисен пурнăç условийĕсем лайăхланса пынă май тата тавар хакĕсене йÿнетнине пула тавар çулсеренех ытларах та ытларах сутăнать. Иртнĕ çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, районти ĕççыннисене 240 пин тенкĕлĕх ытла тавар сутнă.

Ĕççыннисем суту-илŭ организацисене çаврăнăçуллăрах пулма ыйтаççĕ. Ял культурăллă таварсем, велосипедсем, патефонсем, самоварсем, электричество приборĕсем ытларах ыйтать. Анчах районти суту-илŭ организацийĕсем çак таварсене нумайтарах кÿрсе килме тăрăшмаççĕ. Ильинка, Ярославка, Юнкă ялповĕсен магазинĕсенче час-часах тăвар, краççын, пирус пулмасть.

Ялти магазинсенче хыçлă пукансем çукпа пĕрех. «Дуб» артель ун пек пукансене туса кăлармасть. Районти ытти промысла артелĕсем те куллен кирлĕ таварсем сахал туса кăлараççĕ. Иртнĕ çулта артельсем туса кăларнă таварсене 9 пин тенкĕлĕх çеç сутнă. Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем транспорт таварĕсем çуккипе аптăраççĕ пулсан, районти пасарсенче урапа та, кустăрма та, тăрантас çатанĕсем те çук.

Районта суту-илŭ ĕçĕ япăх пыни пултарулă кадрсем тупса лартманнинчен килет. Вĕсене воспитани парас тĕлĕшпе парти райкомĕн куллен ĕçлемелле.

Районта суту-илŭ работникĕсене социализмлă ăмăртăва хутшăнтарас ĕç, ку ыйтупа ялпосене куллен ертсе пырасси япăх тăрать. Суту-илŭ работникĕсем хушшинче хăйсен профессиллĕ пĕлÿлĕхне хăпартас ĕç калама çук начар пырать. Суту-илŭ работникĕсем кăçалхи вĕренÿ çулĕнче партиллĕ вĕренĕве те сахал хутшăннă.

Ильинкăри ялпо работникĕсем тавар çаврăнăш планне ăнăçлă тултарма пулса, районти суту-илŭ организацисене социализмлă ăмăртăва чĕнсе паха пуçару тунă. Вырăнти парторганизаци çак ыйтăва ĕçĕн пуçламăшĕнче пĕрре сÿтсе явнăшех лăпланса ларнă. Парторганизацисем суту-илŭ ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтермелли майсене сахал сÿтсе яваççĕ. Райпотребсоюзри парторганизаци (секретарĕ Романов юлташ) райпотребсоюзри кадрсен ответлăхне ÿстерессишĕн тăрăшмасть. ВКП(б) райкомĕ суту-илŭ органĕсенчи парторганизацисене куллен ертсе пыни питех те кирлĕ.

* * *

ВКП(б) Етĕрне райкомĕн пленумĕнче суту-илŭ ĕçне лайăхлатасси çинчен райком секретарĕ И. Железнов юлташ тунă доклада активлă сÿтсе яврĕç.

Иртнĕ çулта районти суту-илŭ организацийĕсем тавар çаврăнăш планне тултарман. Халăха 715 пин тенкĕлĕх тавар парса çитермен. Кăçалхи пĕррмĕш кварталта та тавар çаврăнăш планне тултарман.

Суту-илŭ уйрăмĕнах ялсенче япăх пулса пырать. Ялпо правленийĕсем ялсенчи уйрăмсенче правительство кăтартнă ассортимент тăрăх таварсем тытас йĕркене пăсаççĕ. Вĕсенче час-часах краççын, савăт-сапа, çупăнь, спичка, кĕпе-тÿмтир т. ыт. куллен кирлĕ таварсене тупса илме хĕн.

Колхозсем строительстве материалĕсем, хуçалăхра кирлĕ япаласем, промышленноçпа культура таварĕсем, уй-хирпе сад-пахча ĕçĕсенче кирлĕ пулакан япаласем ытларах ыйтаççĕ. Ялсенчи магазинсемпе лавккасенче çаксене тупса илме çук. Райпотребсоюз вĕсене кÿрсе килмест. Колхоз правленийĕсем строительство материалĕсемпе хуçалăхра кирлĕ япаласем шыраса Шупашкара, Горькине тата ытти хуласене çÿресе нумай тăкак кураççĕ.

Ялти магазинсемпе лавккасенче культура таварĕсем сахал, вĕсенче кĕнекесем сутассине йĕркелемен. Сураки вăхăтĕнче таварсене хире, колхозниксем ĕçленĕ çĕре илсе тухса сутассине организацилемен. Суту-илŭ работникĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва тивĕçлипе сарман.

Çак çитменлĕхсем вĕсем райсовет исполкомĕн суту-илŭ пайĕ тата райпотребсоюз районти суту-илŭ ĕçне япăх ертсе пынă пирки пулма пултарнă. Суту-илŭ кадрĕсене суйласа илсе ĕçе тĕрĕс вырнаçтарас, вĕсене воспитани парас ĕç те кирлĕ пек пулса пымасть.

Районта суту-илŭ çителĕксĕр пулса пыни ВКП(б) райкомĕн бюровĕнчен те килнĕ. Вăл суту-илŭ организацийĕсен ĕçĕсене çителĕксĕр тĕрĕслесе тăрать, вĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррипе килĕшсе пурăнать, суту-илŭ организацийĕсемпе учрежденисенчи пуçламăш парторганизацисене кадрсене воспитани пама çителĕксĕр пулăшать.

Республикăри промышленноçпа транспорт предприятийĕсенче 1952 çулхи плана срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăрту сарăлсах пырать.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Ăмăртура малта пыракан стахановецсем (сулахайран сылтăмалла): Л. Г. Николаев, Б. Ф. Казиков — Канаш деповĕн машинисчĕсем, Г. С. Тюрин — Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕн фрезеровщикĕ, В. И. Егоров — Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбинатĕнчи столяр, Г. И. Грудочкин — Çĕмĕрлери «Большевик» заводри медник, В. Ф. Воронин — Канашри вагонсем юсакан заводри слесарь, Н. О. Осипов — Канашри вагонсем юсакан заводри электросварщик.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Çул тăваççĕ

Шăхасан районĕнчи колхозсем çул-йĕр ĕçне пысăк хастарлăхпа тытăнчĕç. Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çул-йĕр строительствине хутшăнса çак кунсенче Шăхасанпа Калинино хушшинчи шоссе çулĕ тăрăх йывăççем лартма тытăнчĕç. М. Анисимов юлташ ертсе пыракан çул-йĕр бригади вунă кун хушшинче 15.400 тĕп акацие вĕрене йывăççисем, 2.700 тĕп хурăн лартрĕ тата иртнĕ çул лартнă йывăççем тавра çĕре кăпкалатрĕ. Йывăççем лартакан Т. Миронова, Д. Миронова, М. Егорова юлташсем кулленхи ĕç нормине 100—115 процент тултараççĕ.

Районти ытти колхозсем те çул-йĕр ĕçне активлă хутшăннă. Суворов ячĕпе тăракан колхозри çул-йĕр бригади Шăхасанпа Калинино хушшинчи çула юсама хăйăр турттарать.

Хăйăр турттарас ĕç «За коммунизм», «Дружба» колхозсенче те лайăх пырать.

М. ПЕТРОВ.
В. КУРОПАТКИН.

КОМСОМОЛЬСКИ. Районти колхозниксемпе колхозницăсем тăвайсем 1952 çулхи çул-йĕр ĕçĕсен планне срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва анлă сарма чĕнсе каланине хапăл туса йышăнчĕç, çул-йĕр строительстви енĕпе çĕнĕ обязательствăсем илчĕç.

«Дружба» колхозăн кăçал 25 кубометр чул кăларса хатĕрлемелле, 320 кубометр хăйăр турттармалла, пин кубометр шоссе çине тăпра хăпартмалла. Колхоз çул-йĕр ĕçĕнче ĕçлеме ятарласа бригада организациленĕ. Вăл чул кăлармалли плана тултарнă та ĕнтĕ. Уйрăмах çĕр ĕçĕ тăвасси лайăх пулса пырать.

«Алга», «Светлая жизнь» колхоз членĕсем те çул-йĕр ĕçне активлă хутшăнчĕç. «Алга» колхозри çул-йĕр бригадинче ĕçлекенсем 20 погоннăй метрлă кĕпере май уйăхĕ вĕçленнĕ тĕле туса пĕтерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

А. ЕРЕМЕЕВ.

РАЙОН СОВЕЧĔН СЕССИЙĔ

Нумаях пулмасть Ишлей район Совечĕн сессийĕ пулса иртрĕ. Сесси 1952 çулхи бюджета пăхса тухрĕ.

Район иртнĕ çулхи бюджета тупăшсем енĕпе 103,4 процент, расходсем енĕпе 98,5 процент тултарнă.

Район Совечĕн сессийĕ, кăçалхи бюджета тупăшсемпе расходсем енĕпе 5.803 пин тенкĕ çирĕплетрĕ. Бюджетăн 80 проценчĕ районти социально-культурăллă ĕçсене тума каять.

Яланхи комиссисем ĕçре

Комсомольски районĕнчи Хирти Сĕнтĕр ял Совечĕ (исполком председателĕ Б. Хмелев юлташ) ĕççыннисен массисемпе, активпа тачă çыхăнса ĕçлет, çавна пула ял Совечĕ хăйĕн организациллĕ ĕçне куллен лайăхлатса пырать.

Ял Совечĕ сессисемпе ларусене вăхăтра, лайăх хатĕрленсе ирттерет, сÿтсе явма палăртнă ыйтусем тăрăх ĕçсем вырăнта мĕнле пулса пынине тĕрĕслеме депутатсемпе активистсене заданисем парать. Ял Совечĕ, тĕрĕслев материалĕсемпе усă курса, сÿтсе явнă ыйтусем тăрăх тивĕçлĕ решенисем йышăнать.

Ял Совечĕ решенисем йышăннипе лăпланмасть, вĕсене пурнăçа кĕртнине тăтăш тĕрĕслет.

Ял Совет территорийĕнче Калинин ячĕпе тăракан тата «Гигант» колхозсем вырнаçнă. Темиçе çул хушши ĕнтĕ вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхозсем хуçалăхпа организаци тĕлĕшĕнчен çулсерен ÿссе çирĕпленеççĕ, районта малта пыраççĕ. Хальхи вăхăтра ял Советĕнчи колхозсенче уй-хир бригадисем, выльăх-чĕрлĕх фермисем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Ăмăртура «Гигант» колхозри 5-мĕшпе 6-мĕш уй-хир бригадисем малти вырăна тухрĕç. Вĕсем çуртрисене пуринчен малтан акса пĕтерчĕç. Колхоз правленийĕ çак бригадăсен ĕçне лайăх пахалăхлă тесе йышăнчĕ. Суракинче пысăк ÿсĕмсем тунăшăн 6-мĕш бригадăна колхозăн куçса çÿрекен хĕрлĕ ялавне панă.

Хирти Сĕнтĕр ял Совечĕ хăйĕн организациллĕ-массăллă ĕçне депутатсене, активпа анлăн хутшăнтарать. Ял Совечĕ çумĕнче бюджетпа финанс, ялхуçалăх, культурăпа çутĕç, благоустройство комиссийĕсем ĕçлеççĕ. Вĕсем ял Советне ĕçре пысăк пулăшу параççĕ. Комиссисем хăйсем тавра пысăк актива пĕрлештерсе тăраççĕ. Акă, тĕслĕхрен, ялхуçалăх комиссийĕ 30 активиста хăйĕн ĕçне хутшăнтарать. Вĕсем хушшинче колхоз производствинче малта пыракансем, учительсем, культурăпа çутĕç работникĕсем. Комисси членĕсене уй-хир бригадисемпе выльăх-чĕрлĕх фермисем çумне çирĕплетнĕ. Активистсен ĕçри хастарлăхĕ куллен ÿссе пырать. Уйрăмах Калинин ячĕпе тăракан колхозри фермăсен заведующийĕ Н. Добров депутат пуçарулă ĕçлет. Вăл выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем хушшинче ăнлантару ĕçне лайăх йĕркеленĕ.

Фермăсенче ĕçлекенсем хушшинче актив чăн та пысăк пĕлтерĕшлĕ вăй пулса тăчĕ. Активистсем хăйсен хастарлăхĕпе колхозниксене ĕçре çĕнĕ ÿсĕмсем тума хавхалантараççĕ. Район Совет депутачĕ А. Петрова юлташ нумай çул хушши ĕнтĕ сыснасем пăхакан пулса ĕçлет. Вăл пысăк опытлă, ĕçре пуçарулă депутат. Петрова юлташ хăйпе пĕрле ĕçлекенсем хушшинче час-часах юлташла калаçусем ирттерет, фермăра ĕçлекенсене хăйĕн опычĕпе паллаштарать.

Ял Совечĕ депутатсен ĕçĕсемпе куллен интересленет, активистсен пуçарулăхне, вĕсен паха опытне колхоз производствинчи пур участоксене те сарма тăрăшать, малта пыракансен опытне тĕпчесе вĕренес тĕллевпе час-часах ыйтусем сÿтсе явать.

Нумаях пулмасть ял Совечĕ ялти культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕсене сÿтсе яврĕ. Ку ыйтупа культурăпа çутĕç комиссийĕн председателĕ Ф. Максимов депутат содоклад туса пачĕ. Ял Совечĕ вулав çуртĕнчепе ялти библиотека çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсем колхозниксемпе интеллигенцин ÿссе пыракан культура ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Палăртнă çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерес тесе, ял Совечĕ тивĕçлĕ решени йышăнчĕ. Халĕ вулав çурчĕ хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ, ялти библиотека аван ĕçлет.

Благоустройство комиссийĕ те пуçарулă ĕçлет. Комисси председателĕ В. Федоров юлташ ялсенчи тирпейлĕхпе илемлĕхшĕн куллен кĕрешет. Чылай колхозниксем кăçал хăйсен килĕсем умне йывăççем лартса хăварчĕç. Сырмасенчи вĕперсене çĕнĕрен тунă. Вут-кăварпа кĕрешес ĕç те вăйлансах пырать.

Бюджетпа финанс комиссийĕ хăйĕн тавра 27 активиста пĕрлештерсе тăрать. Ял Совечĕ 1951 çулхи бюджета ăнăçлă пурнăçларĕ. Кăçалхи пĕррмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана 112 процент, иккĕмĕш квартал планне майăн 15-мĕшĕ тĕлне 87 процент тултарнă. Кăçал Калинин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çĕнĕ заема 33 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çийĕнчех тÿлесе татрĕç.

Хирти Сĕнтĕр ял Совечĕ 1952 çул валли пысăк обязательствăсем илчĕ. Ял Совечĕ çак обязательствăсене чыслă пурнăçлассишĕн колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлă сарса пырать.

С. СИДОРОВ.

Агитаторсен шкулĕнче вĕреннĕ хыççăн

ВКП(б) Елчĕк райкомĕ кăçалхи февраль уйăхĕнче Свердлов ячĕпе тăракан колхозра агитаторсен шкулне организациленĕччĕ. Шкулта 33 агитатор вĕренчĕ.

Шкул икĕ уйăх ĕçлерĕ. Занятисем кашни эрнере тăватшар сехет хушши пулса пычĕç. Вĕсене çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсем, ВКП(б) райкомĕн работникĕсем ирттернĕ. Агитаторсем «Халăх хуçалăхне аталантармалли государство планне 1951 çулта тултарнин итогĕсем тата хуçалăхпа культура строительствинчи малашнехи задачăсем», «Коммунизмăн аслă стройкисем», «Большевиксен партийĕ идеологи ыйтăвĕсем тăрăх йышăннă решенисем тата ĕççыннисене коммунизмлă воспитани памалли задачăсем», «Социализмлă ăмăртăва йĕркелес ĕçре тата малта пыракансен опытне сарас çĕрте агитаторсем мĕнле вырăн йышăнса тăни», «СССР çирĕп миршĕн, халăхсен хăрушсăрлăхĕшĕн кĕрешни», «Китай халăх республики», «Демократиллĕ Германи республики», «ССР Союзĕн пуянлăхĕсем», «Колхозниксене хаçат вуласа парасси», «Калаçу ирттерме хатĕрленесси», «Агитаторăн калаçу чĕлхи мĕнле пулмалла», «Капитализмлă çĕршывсем» тата ытти темăсем тăрăх лекцисем итленĕ.

Агитаторсен шкулĕ агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнчĕ. Шкултан вĕренсе тухнă кашни агитатора уйрăм участоксем тăрăх çирĕплетнĕ. Çурхи ĕçсем пынă вăхăтра агитаторсем никçанхинчен лайăхрах ĕçлерĕç. Вĕсем пулăшнипе колхоза çурхи ĕçсене кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа ирттерчĕ.

Уйрăммăнах С. Петров, А. Доброхотов, Г. Пушков, Д. Никифоров, А. Кузнецов, В. Скворцов, Н. Дозоров агитаторсем хастарлă ĕçлерĕç. Кашни бригадăрах стена хаçачĕсемпе боевой листоксем йĕркеллĕ тухса тăчĕç. Агитаторсем, пушă вăхăтпа усă курса, колхозниксемпе калаçусем ирттернĕ, Сталин юлташ патне янă çырура илнĕ обязательствăсене чыслă пурнăçлама кирли çинчен каласа панă, халĕ те вĕсем массăсене ĕçре хавхалантарса пыраççĕ.

Колхозра çураки ĕçĕсем вĕçленчĕç. Анчах большевикла агитаци пĕр вăхăтлăха та чарăнмасть. Хирте-и, пахча çимĕç бригадинче-и, выльăх-чĕрлĕх фермине-и,—пур çĕрте те агитаторсен витĕмлĕ сăмахĕ илтĕнет.

Аркадий Доброхотов сад пахчи бригадинче ĕçлет. Унăн калаçăвне колхозниксем яланах юратса итлеççĕ.

Свердлов ячĕпе тăракан колхозăн сад-пахчи—районти чи лайăххисенчен пĕри. Колхоз унтан çулсерен вуншар пин тенкĕ тупăш илет.

— Пирĕн сад, чăн та, лайăх ĕнтĕ,— тет агитатор колхозниксене.—Анчах пирĕн унпа лăпланса лармалла мар. Кирлĕ пек пăхмасан, тухăçлă çимĕç туса илесси çинчен шухăшламалли те çук. Садра Мичурин сорчĕсем те пур. Пирĕн çав сортсене тĕпчесе вĕренсе тата лайăхрах сортсем тума тăрăшмалла.

Колхоз государство умĕнчи пур парăмсене те вăхăтра пурнăçласа пырать. Пĕррмĕш кварталшăн выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парса татнă. Ку ĕçсенче те агитаторсем пысăк вырăн йышăнчĕç.

— Политикăллă агитацире идейăллăх тĕп вырăн йышăнать. Эпир кашни колхозник хăйĕн ĕçĕ пирĕн халăх миршĕн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешнипе тачăн çыхăнса тăнине лайăх ăнлантăр тесе тăрăшатпăр. Хамăр çĕршыври тата урăх çĕршывсенчи ĕçсем çинчен тăтăшах ăнлантарса парса, ĕççыннисене умра тăракан задачăсене пурнăçлама мобилизацилетпĕр,—тет партбюро секретарĕ Добронравов юлташ.

...Колхозра агитаторсен канашлăвĕ пырать. Агитаторсем умра тăракан задачăсене сÿтсе яваççĕ, план туса хатĕрлеççĕ. Тахăшĕ агитаторсен шкулĕ çинчен сăмах пуçларĕ.

— Çапла, лайăх пулчĕ вăл пирĕншĕн, агитаторсемшĕн,—терĕ ферма заведующийĕ Н. Марков юлташ.—Çитес вăхăтра татах организацилемелле ăна. Çĕнĕ агитаторсем ÿссе çитĕнччĕр колхозра.

Çурçĕр иртсен кăна саланчĕç агитаторсем. Кашниех пысăк тухăçлă тырпул çинчен, йышлă выльăх-чĕрлĕх çинчен, техникăллă культурăсем çинчен калаçса пычĕç.

Агитаторсем колхоз чысĕшĕн, вăл районта чи малта пыракан колхоз пултăр тесе, ырми-канми ĕçлеççĕ, колхозниксене коммунизмăн ăнланулă тата активлă строителĕсем пулма вĕрентеççĕ.

А. ЖИРНОВ.

Елчĕк районĕ.

„Коммунизм" колхоз выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлет

Пĕрлешсе пысăкланнă «Коммунизм» колхоз общественлă продуктивлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана ытлашшипех тултарнă. Çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх йышне, артеле çирĕплетсе панă çĕр лаптăкне кура, 1953 çулта пулмалли минимумран та ирттернĕ. Юлашки çулсенче артель лашасен йышне те чылай ÿстернĕ.

— Эпир выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк шутне ÿстерме пултартăмăр,—тет колхоз председателĕ В. Давыдов юлташ,—халĕ ĕнтĕ пирĕн умра вĕсен тухăçлăхне ÿстерес задача тăрать.

Çак ыйту артель членĕсене питех те хумхантарать, мĕншĕн тесен халлĕхе колхоз фермисенче выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ. Сăмахран, иртнĕ çул кашни ĕнерен 800-шер литр кăна сĕт суса илнĕ. Çавнашкалах сысна, сурăх, кайăк-кĕшĕк фермисенчен те продукци планпа пăхниннчен сахалтарах илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне хăвăрт ÿстерсе пыма кансĕрлекен тĕп чăрмав вăл çак таранччен выльăх апачĕн никĕсĕ çирĕп марри пулнă. Акă, пĕлтĕр выльăх-чĕрлĕх валли арпа-улăм çителĕклĕ хатĕрленĕччĕ. Анчах та утăпа сĕтеклĕ апат хатĕрлемелли плана тултарман, витаминлă апатсем пачах пулман. Çавна пула иртнĕ хĕл вăхăтĕнче фермăсенче продуктивлă выльăх-чĕрлĕхе арпа-улăмпа усранă. Çак çитменлĕхе пĕтерес тесе, колхозниксем выльăх апачĕн çирĕп никĕсĕшĕн çине тăрсах кĕрешме тытăннă.

Колхозăн выльăх апачĕ хатĕрлемелли план пур. План тăрăх кăçал 4.400 центнер утă, 7.000 центнер арпа-улăм, 9.180 центнер сĕтеклĕ апатсем хатĕрлемелле. План тунă чухне артель хуçалăхĕнчи мĕнпур ресурссене тата майсене, государство выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне малалла ÿстерсе пыма панă заданисене тултарассине тата ирттерсе тултарассине шута илнĕ. Кун хыççăн колхозниксем пĕр вывод тунă: выльăх-чĕрлĕх валли апат кăçал кăна мар, çуллен ытлăн-çитлĕн хатĕрлемелле.

Выльăх апачĕн никĕсне çирĕплетес тесе, колхоз мĕн-мĕн тăвать-ха?

Государство колхоза ĕмĕрлĕхе усă курма 1.173 гектар çĕр çирĕплетсе панă. Колхозниксем çĕр ĕçĕнчи çĕнĕ майсене хăвăрт йышăнаççĕ, пурнăçа кĕртеççĕ. Вĕсем вăйлă тырпулшăн кĕрешсе, çĕре çултан-çул çемçетсе, çĕнетсе пыраççĕ. Çак ĕçре МТС пысăк пулăшу парать. Пĕр артеле пĕрлешиччен вак колхозсене, çĕр лаптăкĕ пĕчĕк пулнă пирки, тракторсем пырса та кĕмен темелле. Иртнĕ çулта вара колхозра çĕре 60 процент таран тракторсемпе сухаланă.

Колхоз уй-хирĕсенче халĕ хĕрÿ ĕç пĕр самантлăха та лăпланмасть. Бригадăсем çурхи ĕçсене хăвăртрах вĕçлессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхоз кÿршĕри Киров ячĕпе тăракан артельпе ăмăртать.

— Кăçал кашни гектартан 18-шар центнертан кая мар тĕштырă туса илетпĕр,—теççĕ колхоз ĕçченĕсем.

Паллă ĕнтĕ, пысăк тухăçлă тырпул туса илни общественлă выльăх-чĕрлĕх валли тĕштырă, арпа-улăм çителĕклĕ уйăрма май парать.

Тырпул тухăçлăхне малалла ÿстерсе пырас тата выльăхсем валли çирĕп апат никĕсĕ туса хурас ĕçре курăк акмалли çĕрĕç системине пурнăçлани тĕп вырăн йышăнать. Çакна «Коммунизм» колхоз членĕсем аван ăнланса илнĕ. Колхоз курăк акмалли вунă уйлă пусă çаврăнăшĕ тунă. Кунсăр пуçне кăçал выльăх апачĕ акса тумалли пусă çаврăнăшĕсем организациленĕ.

Ялхуçалăх артелĕ нумай çул ÿсекен курăксем чылай акса тăвать. Унăн уйĕнче 73 гектар акнă клевер пур, кăçал татах 66 гектар акнă. Кашни гектартан 33-шер центнер клевер утти пухса кĕртме палăртнă. Ку сахал-ха. Каярахпа клевера иккĕмĕш хут çулаççĕ.

Курăк вăррисем ытларах пулччăр тесе, артель çулсеренех курăк вăрлăхĕ тумалли участоксем уйăрса хăварать, вăрлăх чылай туса илет. Пĕлтĕр 29 центнер клевер вăрри пухса кĕнĕ. Колхоза кирлинчен ытлашшине государствăна сутса 23 пин тенкĕ укçа илнĕ. Кăçал вăрлăх тума клеверпа люцерна тата тимофеевка пурĕ 24 гектар хăвараççĕ.

Артель пĕр çул ÿсекен курăксем те акса тăвать. Нумаях пулмасть 35 гектар çине сĕлĕпе вика хутăштарса акнă. Производство планĕ тăрăх çав лаптăк çинчен 91 тонна утă пухса кĕртмелле.

Улăхсенче тата кĕтÿ çÿретмелли вырăнсенче агротехникăллă ĕçсем туса ирттереççĕ: курăк вăррисем акаççĕ, тĕмескесене тасатаççĕ, çÿрелесе аванлатаççĕ, кирлĕ вырăнта сухаласа çĕнетеççĕ. Кăçал кашни гектартан 20 центнертан кая мар улăх утти пухса кĕртме шутлаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне, уйрăмах ĕнесен сĕт тухăçлăхне ÿстерме сĕтеклĕ апатсем нумай кирлĕ. Колхоз кăçал улттă гектар çине выльăх кăшманĕ акнă. Гектартан 28 тонна, пĕтĕм лаптăкран 168 тонна кăшман туса илесси шанаççĕ. Фермăсем валли çĕрулми çителĕклĕ пуласси каламасăрах паллă. Вăл 51 гектар йышăнать. Колхозниксем гектар пуçне 170 центнертан кая мар çĕрулми туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Силос—паха апат. Анчах та, тĕрĕслĕхе пытарма çук, пĕр-икĕ çул каярах кунти колхозсенче силос усине сахал пĕлнĕ. Ун чухне хăшпĕр колхозниксем çапла каланă: çĕр ăшне курăк чикнипе ăçтан-ха лайăх апат пултăр, тенĕ. Халĕ кунашкал шухăша пĕтерне. Артель членĕсем силос ытларах хывма тăрăшаççĕ. Ăна кăçал пурĕ 400 тонна, пĕлтĕрхинчен чылай ытларах хывма йышăннă.

Производство планĕнче çапла каланă: силос тума кашни гектартан 30 тоннăран кая мар, пурĕ (çичĕ гектар çинчен) 210 тонна хĕвелçаврăнăш пухса кĕртмелле. Анчах та силос хывма хĕвелçаврăнăш çитес çук. Çавăнпа та, иртнĕ çулхи пекех, вăрмантри, çырма-çатрасенчи курăксене тата çумкурăксене пухма, каярахпа çĕрулми аврипе тата пахча çимĕç çулçипе усă курма пăхнă. Пĕлтĕр кун пек хывнă силос кăçал лайăх тухнă, ăна выльăхсем юратса çиеççĕ.

Силоса, пĕлтĕрхи пекех, трактор вăйĕпе ĕçлекен силосорезкăпа тураса хывмалла пулать. Колхозăн кирпĕчрен тунă лайăх траншейăсем пур.

Кăçал витаминлă утă, вĕлтĕрен, типĕтнĕ армути, çулçăллă апат чылай хатĕрлеççĕ.

Иртнĕ çулсенче выльăх апачĕ акса тăвас ĕçе уй-хир бригадисем пурнăçланă. Çак ĕçе лайăхлатас шутпа 1951 çулхи кĕркунне ятарласа выльăх апачĕ хатĕрлекен бригада организациленĕ. Ăна 98 гектар çĕр, лашасем, ĕç хатĕрĕсем çителĕклĕ çирĕплетсе панă. Бригадăна ертсе пыма опытлă колхозника С. Никитин юлташа уйăрнă. Организаторла ĕçре ăна колхоз председателĕн заместителĕ Г. Андреев юлташ пысăк пулăшу парать.

Колхоз правленийĕ бригадăна выльăх апачĕ хатĕрлеме, выльăх апачĕ валли акса тăвакан культурăсен тухăçлăхне ÿстерме производствăллă задани панă. Бригадăн çав заданипе килĕштерсе тунă ĕç планĕ пур, халĕ пĕтĕм ĕç план тăрăх пурнăçланса пырать.

Бригадăра пĕтĕмпе 42 çын ĕçлет. Вĕсем хăйсен ĕçне тăрăшса тăваççĕ. Хĕлле вĕсем çирĕплетсе панă участока 180 тонна тислĕк, 245 лав торф кăларнă, 44 тонна минераллă удобренисем кÿрсе килнĕ, кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ чылай хатĕрленĕ.

Выльăх апачĕ хатĕрлекен бригадăра халĕ хĕрÿ ĕç вăхăчĕ. Колхозниксем пур ĕçсене те хăвăртрах та пысăк пахалăхпа туса ирттерме тăрăшаççĕ. Кăçал вĕсем 13 гектар çине нумай çул ÿсекен курăксем, 11 гектар сĕлĕ, 8,5 гектар утăлăх сĕлĕпе хутăш вика, 6 гектар выльăх кăшманĕ, 4,5 гектар хĕвелçаврăнăш акнă, çĕрулми лартаççĕ тата ытти культурăсем те акаççĕ. Вĕсем агротехника кăтартăвĕсене тăтăшах пурнăçласа пыма тăрăшаççĕ. Сăмахран, бригада кăçал кашни гектартан 280-шар центнер выльăх кăшманĕ туса илме сăмах панă. Çак çитĕнÿ хăй тĕллĕн пулмасть. Уншăн бригада членĕсем вăй-хала шеллемĕç. Вĕсем кăшман вăррине лайăх çемçетнĕ вырăна, сеялкăпа акнă. Унăн калчине вырăнти тата минераллă удобренисемпе апат пама, икĕ хутчен сайралатма, çумкурăкĕсенчен вăхăтра тасатма тата тăпран çиелти сийне виçĕ хутран кая мар кăпкалатма палăртнă. Хĕвелçаврăнăшпе те çавнашкалах лайăх пăхса çитĕнтересшĕн: çуллахи вăхăтра ăна çумласа, йăрансем хушшине икĕ-виçĕ хут çемçетсе, аврисем хушшине тăпра купаласа тăрасшăн.

— Эпир колхоз шанса панă ĕçе тÿрре кăларассишĕн кĕрешетпĕр,—тет Никитин юлташ.—Ферма çумĕнчи тата улăх-сарансем çинчи пусă çаврăнăшĕсене йĕркелесе çитересси—пирĕн умра тăракан задача. Ăна—пурнăçлатпăрах.

Чăнах та ĕнтĕ бригадăн пысăк ĕçсем тумалла: выльăх апачĕ валли акса-лартса тăвакан культурăсене пăхса ÿстермелле, вĕсен вăрлăхĕсене хатĕрлемелле, çарансемпе кĕтÿ кĕтмелли вырăнсене тĕпренех лайăхлатмалла, çуллахи вăхăтра кĕтÿ çÿретме тата симĕслех çулса выльăхсене тăрантарма курăксем акса çитентермелле, силос хывмалла, утă çулмалла т. ыт. те.

Силос хывасси, утă çуласси—йывăр ĕçсем. Вĕсене тума выльăх апачĕ хатĕрлекен бригада членĕсем хăйсем тĕллĕн ăлкĕреймĕç, уй-хир бригадисемпе МТС пысăк пулăшу парĕç. Çапла пулать те, мĕншĕн тесен выльăх апачĕ хатĕрлесси—пĕтĕм колхоз ĕçĕ.

Колхозниксем кăçал колхоз хуçалăхне вăйлатса малалла аталантармалли пиллĕк çуллăх план (1952—1956 çулсем) туса çирĕплетнĕ. Çав план тăрăх, артель фермисене пысăк тупăш паракан тумалла. Çак ĕçре выльăх апачĕ—тĕп никĕс пулмалла.

Çапла ĕçлеççĕ выльăх апачĕн никĕсне çирĕплетессишĕн «Коммунизм» колхоз членĕсем. Вĕсем Трофим Денисович Лысенко академик каланă сăмахсене аван ăнланаççĕ: «Выльăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне ÿстерес, выльăх ăратне лайăхлатас тата çĕнĕ ăратсем тăвас ĕçĕн тĕп никĕсĕ вăл—выльăх апачĕ, выльăх-чĕрлĕхе мĕнле пăхни пулать».

М. ОСИПОВ.

Сĕнтĕрвăрри районĕ.

Халăх демократи çĕршывĕсенче

Польшăра ачасем савăнăçлă пурăнаççĕ

ВАРШАВА, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăра Тĕнчери ачасене хӳтĕлемелли куна иртерме хатĕрленеççĕ. Çав куна миршĕн, ачасен телейлĕ пулăслăхĕшĕн кĕрешме чĕнекен лозунгпа ирттереççĕ.

Çак лозунг Польша Халăх Республикинче пурнăçланса пырать. Польша историйĕнче малтанхи хут ачасене пурне те çичĕ çул вĕрентме тытăннă. Пуçламăш шкулсенче 3.200 пин ача вĕренет. Польша Халăх Республикин правительстви ачасемшĕн тимлĕ тăрăшать. Çĕршывăн илемлĕ вырăнĕсенче—тинĕс хĕрринче, тусем çинче, юханшывсен айлăмĕсенче, пĕлтĕрхи пекех, ачасене çуллахи вăхăтра канма лагерьсем пулаççĕ. Кăçал лагерьсенче 800 пин ача ытла канать.

Шкул çулне çитмен ачасемшĕн те тимлĕ тăрăшаççĕ. 1951 çулта ача яслисем, вăрçă умĕнхи вăхăтрипе танлаштарсан, 10 хут нумайрах пулнă. Ача сачĕсенчи ачасен йышĕ, вăрçăчченхипе танлаштарсан, 4,5 хута яхăн ытларах пулнă.

Польша республикинче промышленноçăн кивĕ предприятийĕсене çĕнетеççĕ тата пысăклатаççĕ. Хура металлурги завочĕсене çĕнĕ техникăпа пуянлатса пыраççĕ.

Ченстоховри металлурги заводĕнче çĕнĕ домна кăмаки тăваççĕ. Çу кămака çулталăкра çĕршер пин тонна металл шăратса кăларма пултарать.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: домна кăмакине тунă çĕрте.

В. САВОСТЬЯНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Мао Цзе-дун Китай халăх добровольцĕсен делегацийĕпе Корея халăхĕн делегацине йышăннă

ПЕКИН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентстви çапла пĕлтерет:

Ĕнер Халăхăн центральнăй правительствин председателĕ Мао Цзе-дун Китай халăх добровольцĕсен делегацийĕ тата Корея халăхĕн делегацийĕ ячĕпе йышăну ирттернĕ. Йышăнура Халăхăн центральнăй правительствин председателĕн заместителĕсем Чжу Дэ тата Лю Шао-ци, Государствăн администраци совечĕн премьерĕ Чжоу Энь-лай пулнă.

Мао Цзе-дун зала пырса кĕнĕ чухне делегаци членĕсем тăвăллăн алă çупнă.

Китай халăх добровольцĕсен делегацийĕн пуçлăхĕ Ли Сюэ-сань тата Корея халăхĕн делегацийĕн пуçлăхĕ Хон Сун Чер сăмах тухса каланă. Вĕсем Мао Цзе-дуна, Чжу Дэне, Лю Шао-цине тата Чжоу Энь-лая чечексем панă.

Делегацисем ăшă кăмăлпа ырă сунние ответлесе, Мао Цзе-дун сăмах каланă. Корейăпа Китай халăхĕсен Совет Союзĕ ертсе пыракан мирпе демократи лагерĕнчи халăхсен туслăхне çирĕплетессишĕн тата ытларах тăрăшмалла, тенĕ Мао Цзе-дун.

Тибета ирĕке кăларнăранпа пĕр çул çитрĕ

ШАНХАЙ, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Китайри хаçатсем Тибета мирлĕ майпа ирĕке кăларнăранпа пĕр çул çитнине палăртаççĕ. Çакăн çинчен ятарласа çырнă статьясем пичетленĕ.

«Синьвэньжибао» хаçат çакна палăртать: Тибета мирлĕ майпа ирĕке кăларни Китай Халăх Республикинчи халăхсен пĕрлĕхĕн аслă çĕнтерĕвĕ пулса тăрать. Çулталăк каярах Тибет халăхĕ империализм пусмăрне сирсе ывăтрĕ, Китайри туслă халăхсен çемйине кĕчĕ.

Иртнĕ çулталăк хушшинче Тибет халăхĕ Центральнăй Халăх правительстви пулăшнипе пурнăç условийĕсене чылай лайăхлатнă. Паян Китай Халăх банкĕ Тибетри тата Чамдо районĕнчи хресченсене 30 миллиард юань чухлĕ укça-тенкĕ кивçен уйăрса пани çинчен пĕлтереççĕ. Çак пулăшу Тибет халăх хуçалăхне малалла аталантарма тата халăх пурнăçне лайăхлатса пыма пулăшать.

ПЕКИН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Гуанминжибао» хаçат паян Тибета мирлĕ майпа ирĕке кăларнăранпа çулталăк тултарни çинчен умстатья пичетлĕсе кăларнă.

Хаçат çапла çырать: Тибета мирлĕ майпа ирĕке кăлармалли ĕçсем çинчен килĕшӳ туни Тибет халăхне ĕмĕрлĕхех империализмла чуралăхран хăтарчĕ, ăна Китайри халăхсен аслă çемйине кĕртрĕ, ăна телейлĕ пурнăç тумалли çула уçса пачĕ. Çав килĕшĕве туни Тибет халăхĕшĕн кăна мар, пĕтĕм Китай халăхĕшĕн те пысăк вырăн йышăнать. Çакă вăл Мао Цзе-дун председателĕн тата Китайри коммунистсен партийĕн наци политики чăпăл çитĕнӳ тунине пĕлтерет.

Халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çар Тибета ирĕке кăларас тĕлĕшпе пархатарлă ĕç тунине палăртса, хаçат çапла çырать: Халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çар чаçĕсем, хăйсем умне лартнă задачăна пурнăçласа, Тибетри тĕн çыннисемпе тата халăхпа туслă çыхăнусем тытса пурăнма пуçларĕç. Халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çарти çынсем тата Халăхăн центральнăй правительстви Тибетра ĕçлеме янă работниксем Мао Цзе-дунăн наци политикин принципĕсене çирĕп тытса пыраççĕ, Тибета мирлĕ майпа ирĕке кăларас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен йышăннă килĕшĕве лайăх пурнăçласа пыраççĕ, çавна пула вĕсене Тибет халăхĕ кăмăллать.

Халăхăн центральнăй правительстви тата Халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен çар чаçĕсем пулăшнипе Тибет халăхĕн пурнăçĕ лайăхланса пынă, унăн культурăллă шайĕ ӳснĕ. Çак чаплă çитĕнӳсем Тибет халăхĕ хушшинче патриотла шухăш-кăмăл сарма, Тибет çыннисемпе китаецсем тата Китай халăх республикинчи ытти тăванла халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнассине çирĕплетме пулăшаççĕ.

Тибета мирлĕ майпа ирĕке кăларас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен йышăннă килĕшĕве малалла пурнăçласа пыни пирĕн тăван çĕршывăн строительствинче, çĕнĕ, чечекленекен Тибет тăвас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума май парать, тесе çырать хаçат.

Венгрири демократиллĕ хĕрарăмсен союзĕн съезчĕ

БУДАПЕШТ, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Будапештра Венгрири демократиллĕ хĕрарăмсен союзĕн виççĕмĕш съезчĕ уçăлнă. Съезда 600 делегат пухăннă. Хăнасем хушшинче—Венгри Халăх Республикин Президиумĕн председателĕ Шандор Ронаи, Пĕтĕм Венгрири мир совечĕн ертсе пыракан работникĕсем, Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕн делегацийĕ, совет хĕрарăмĕсен делегацийĕ, Китай Халăх Республики, Болгари, Румыни, Франци, Итали тата ытти çĕршывсен хĕрарăмĕсен делегацийĕсем. Венгрири демократиллĕ хĕрарăмсен союзĕ иккĕмĕш съезд пулнăранпа (1948 çул) мĕнле ĕçсем туни çинчен союзăн генеральнăй секретарĕ Иштванне Ваш доклад тунă.

Съезда пухăннисем Иштванне Ваш доклад тунă вăхăтра темиçе хутчен те прогрессивнăй пĕтĕм этемлĕхĕн çулпуçне И. В. Сталин юлташа чысласа тăвăллă алă çупнă. Доклад хыççăн темиçе минут хушши тăвăллă алă çупнă. «Сталинпа пĕрле миршĕн кĕрешер!», «Сталин — Ракоши!», «Хамăр ачасен телейне хӳтĕлер!» тесе саламласа кăшкăрнă.

Доклад хыççăн пренисем пуçланнă.

БУДАПЕШТ, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Венгрири демократиллĕ хĕрарăмсен союзĕн виççĕмĕш съезчĕ хупăннă.

Съезд, пурте пĕр саслă пулса, Иштванне Ваш доклачĕ тăрăх резолюци йышăннă. Резолюцире Венгрири демократиллĕ хĕрарăмсен союзĕн речĕ ӳснине, Венгрири хĕрарăмсем социализм тăвас ĕçре тата мире сыхлас ĕçре çитĕнӳсем тунине палăртнă.

Резолюци Венгрири хĕрарăмсене Совет Союзĕнчи хĕрарăмсенчен пример илме, мире хӳтĕлессишĕн тата халăх хуçалăхĕн пилĕк çуллăх планне пурнăçлассишĕн активлăрах кĕрешме чĕнет.

АВСТРИРИ МИРШĔН ТĂРАКАНСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ

ВЕНА, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Миршĕн тăракансен Австрири совечĕ çакăн çинчен пĕлтерет: Дорнбирн хулинче (Форарльберг) Форарльбергри миршĕн тăракансен конференцийĕ пулса иртнĕ. Конференци Форарльбергри халăха чĕнсе калани йышăннă. Вĕсем [illegible] Австри влаçĕсем çар сооруженийĕсем тутарнине хирĕç, вăрçă пуçарма чĕнсе пропаганда тунине хирĕç çине тăрса кĕрешме чĕннĕ.

Конференци пĕр шухăшлă пулса резолюци йышăннă. Унта американецсем Корейăра Çурçĕр-Хĕвелтухăç Китайра бактериллĕ хĕçпăшал усă курнине хирĕç протестленĕ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ майăн 24-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле çак кун хушшинче пур фронтсенче те тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă, тăшман атакисене йăнăçлă сире-сире янă.

Хĕвеланăçĕнчи фронтра, Дянхыдон патĕнче, тăшман темиçе хутчен те Халăх çарĕн позицийĕсем çине тапăннă. Анчах Халăх çарĕн чаçĕсем тупăсемпе тата пăшалсемпе персе тăшмана пула тăшманăн каялла чакмалла пулнă.

Ытти фронтсенче палăрмалли улшăнусем пулман.

Хĕвелтухăçĕнчи çыран çывăхĕнче Халăх çарĕн чаçĕсем тăшманăн виçĕ карапне шыва путарнă, пĕр карапне пысăк сиен кӳнĕ. Çав карапсем уйччен, Чхончжинь районĕнче çыран патне çывхарса, мирлĕ халăх çине тупăсемпе пенĕ пулнă.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн 7 самолетне персе ӳкернĕ, 4 самолетне сиенленĕ. Çав самолетсем уйччен, ытти самолетсемпе пĕрле, тылри районсенчи мирлĕ хуласемпе ялсем çине бомбăсем тискеррĕн пăрахма хутшăннă пулнă.

ПХЕНЬЯН, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле пур фронтсенче те тăшмана хирĕç халичченхи вырăнсенчех оборонăра тăрса çапăçнă.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата тăшман самолечĕсене хирĕç çапăçакан салтакĕсем тăшманăн тăватă самолетне персе ӳкернĕ. Çав самолетсем уйччен, ытти самолетсемпе пĕрле, халăх пурăнакан районсене бомбăсем пăрахма хутшăннă пулнă.

Кочжедо утравĕ çине çĕнĕ çар чаçĕсем янă

НЬЮ-ЙОРК, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америка 8-мĕш çарĕн штабĕн представителĕ Корейăра çапăçакан Канадăпа Англи çарĕсен хăшпĕр чаçĕсене Кочжедо утравĕ çине ярасси çинчен каласа панă. Кочжедо утравĕ çине иртнĕ эрнере янă Американ 187-мĕш авиаци десанчĕн полкĕ çумне пĕр батальона яхăн салтак хутшăнать.

Америка империалисчĕсем Çывăх тата Вăтам Хĕвелтухăçĕнче вăрттăн усал ĕçсем тăваççĕ

ПАРИЖ, майăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Америка империалисчĕсем вăрçă хатĕрленмелли çĕнĕ блок тума тытăннă. Çав блока Çывăх тата Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсем, çавăн пекех Вăтаçĕр тинĕс тăрăхĕнчи хăшпĕр государствăсем кĕмелле.

Çакна май ют çĕршывсенчи хаçатсем Греци премьер-министрĕн ĕçĕсене тăваканĕ тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Венизелос араб çĕршывĕсене кайса çӳреннине палăртаççĕ. Венизелос унта кайиччен Грецине Турци хушшинче çар ыйтăвĕсемпе калаçусем ирттернĕ.

Венизелос араб çĕршывĕсене тухса кайнă вăхăтрах Турципе агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика союзĕн Кăнтăр Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ—Америка генералĕ Кэрни çӳрет. Вăл çĕршыври çар объекчĕсене тĕрĕслет. Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Кэрни генерал Турципе Греци хушшинче çар тĕлĕшпе тачă çыхăну тытмалла тăвас тĕллевпе Турцие пыни çинчен каланă.

Майăн 21-мĕшĕнче Тегерана Америкăн Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи тинĕс-çар вăйĕсен командующийĕ Хьюз генерал пынă. Вăл Иран генеральнăй штабĕн начальникĕпе тата çар министрĕн заместителĕпе тĕл пулса калаçнă. Иранри хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Хьюз Иран шахĕпе те тĕл пулать, вăл Тегеранра, тĕпрен илсен, Çывăх Хĕвелтухăçне «хӳтĕлемелли» план тăвасси çинчен сӳтсе явать.

Çывăх тата Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче çавăн пекех США-н государство секретарĕн Çывăх Хĕвелтухăç, Кăнтăр Ази тата Африка тĕлĕшпе ĕçлекен помощникĕ Байроуд çӳрет.

Араб çĕршывĕсен информаци агентствинчен илнĕ хыпар тесе, Ливанра тухакан «Аль-Байрак» хаçат çакна кăтартса парать: Венизелос араб çĕршывĕсене кайса çӳрени Вăтаçĕр тинĕс блокне тумалли плана çыхăнса тăрать. «Калаçусем вăхăтĕнче Вăтаçĕр тинĕс тăрăхĕнчи государствăсем хушшинче килĕшӳ тăвас ыйтăва сӳтсе явмалла», тесе çырать хаçат.

Çакна май «Ащ-Шарк» хаçат çапла çырать: «Венизелос Вăтаçĕр тинĕс союзĕн проектне тĕпчесе вĕренес тĕллевпе пынă. Çак ĕçе араб çĕршывĕсем тăрăх çӳренĕ хыççăн Испанин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Артахо пуçарнă».

Египетри «Аль-Мысри» хаçат майăн 19-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ: араб çĕршывĕсен столицисенчен тата «Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи командовани» тăвас ĕçе пуçарнă державăсен столицисенчен килекен хыпарсем çак «командование» проекта ырлакан çĕршывсене хутшăнтарса тума вăрттăн хăтлани çинчен кăтартса параççĕ».

Ливанри «Ас-Сарха» хаçат Венизелос çӳрени Артахо тата Байроуд ирттерекен калаçусемпе çыхăнса тăнине палăртать. Çакăн пек çӳренисем, тесе çырать хаçат, «Вăтаçĕр тинĕс пакчĕн проектне пурнăçласа, пирĕн çĕршыва агрессиллĕ вăрçă валли плацдарм туса хурас тĕллев тытаççĕ». Хаçат çак пакт агрессиллĕ пакт пулнине тата ăна американецсен вăрçа хатĕрленмелли планĕсемпе килĕштерсе тунине кăтартса парать. Çавăнпа та, тесе çырать хаçат, «Ливан халăхĕ Венизелос килсе çӳрени çĕршыва оккупацилемелли проектсене тата агрессиллĕ проектсене пурнăçламалли ĕçсемпе çыхăнса тănине пĕлсе тăрать. Çав проектсене пурнăçлани пĕтĕм тĕнчери мире хирĕç, ирĕклĕхшĕн пыракан юхăма хирĕç, Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенчи халăхсен шухăш-кăмăлне хирĕç пырать. Ливан халăхĕ çавăн пек агрессиллĕ мĕнпур проектсене хирĕç кĕрешме хатĕр тăни çинчен пĕлтерет».

ПĔТĔМ ТАИЛАНДРИ МИРШĔН КĔРЕШЕКЕНСЕН КОМИТЕЧĔ АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ КОРЕЙĂРА БАКТЕРИЛЛĔ ХĔÇПĂШАЛПА УСĂ КУРНИНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕТ

ШАНХАЙ. (ТАСС). Пĕтĕм Таиландри миршĕн кĕрешекенсен комитечĕ заявлени çырса кăларнă. Унта вăл Америка çарĕсем Корейăра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине хирĕç протестлет. Заявленире çапла каланă:

«Америкăн Корейăра Пĕрлешнĕ нацисен ялавĕ айĕнче çапăçакан хĕçпăшаллă вăйĕсем Корейăпа Китайăн мирлĕ халăхне ушкăнĕ-ушкăнĕпе тискеррĕн вĕлерсе пĕтерме бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курни çинчен пĕлсен, мире юратакан халăхсем хытă тарăхрĕç.

Таиландри мире юратакан халăх тискер ĕçсенчен асап куракан Корейăпа Китай халăхĕсене хăй юратнине палăртать.

Тĕнчери çĕршывсем пĕр-пĕрин хушшинче йышăннă правăсен тата этемлĕхе хисеплес йĕркен тĕп принципĕсене пĕтĕмпех пăснă.

Çав тискерлĕхсем тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери халăхсем, Таиланд халăхĕ пекех, тарăхаççĕ, çавăн пек тискер ĕçсене сивлеççĕ.

Пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ, Совет правительстви пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăварма пĕтĕм вăя хурса тăрăшать, Пĕтĕм Тĕнчери Мир Совечĕн резолюцийĕсене пĕтĕмпех ырлать. Çапла, сăмахран, вăл вăрçă пуçлама чĕнсе пропаганда тăвакансене наказани памалли çинчен закон йышăнчĕ, пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшӳ тума чĕнсе каланине ырларĕ, хĕçпăшалсăрланмалли тата атомлă хĕçпăшала чарса лартмалли план йышăнма чĕнчĕ. Çаксем пурте мĕнпур çĕршывсенчи халăхсен шухăш-ĕмĕтне палăртаççĕ тата Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн решенийĕсемпе килĕшсе тăраççĕ.

Çаксене асра тытса, эпир Совет правительствинчен Корейăра американецсем бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курассине пĕтĕмпех чарса лартассишĕн халичченхи пекех тимлĕ тăрăшма ыйтатпăр».

Футбол

Хула кубокне илмелли вăйăсем

Майăн 25-мĕшĕнче Шупашкарти «Молния» спорт обществи стадионĕнче Шупашкар хулин футбол вăййи кубокне илессишĕн малтанхи вăйăсем пулчĕç. «Динамо» спорт обществин пĕрремĕш командипе «Спартак» спорт обществин иккĕмĕш футбол команди хушшинчи вăйăра спартаковецсем 1:3 шутпа выляса ячĕç.

Иккĕмĕш вăйăра Чапаевски поселок командипе «Спартак» спорт обществин пĕрремĕш футбол команди тĕл пулчĕç. Вăйăра 4:3 шутпа Чапаевски поселок команди çĕнтерчĕ.

Комбинатри физкультурниксем

ÇĔМĔРЛЕ. Сĕтел-пукан комбинатĕнче ĕçлекен çамрăксем хушшинче физкультурăпа спорт ĕçĕ сарăлсах пырать. Юлашки икĕ çул хушшинче физкультурăпа тата спортпа интересленекен çамрăксен шучĕ кăна мар, вĕсен мастерлăхĕ те чылай ӳсрĕ. Тĕрлĕ спорт секцийĕсен ĕçĕ лайăхланчĕ.

Иртнĕ çулсенче ик-виçĕ тĕрлĕ спорт кăна сарăлнăччĕ. Халĕ «Красная звезда» спорт обществинче волейбол, баскетбол, йывăр атлетика, бокс, штанга, теннис, шахматпа шашка секцийĕсем ĕçлеççĕ.

Иртнĕ хĕлле ирттернĕ ăмăртусем пирĕн хушăра пултаруллă спортсменсем пуррине палăртрĕç. Хулăра спортсмен-разрядниксен хисепĕ 40 çынтан иртет.

Хĕллехи сезонта пирĕн йĕлтĕрçĕсем «Красная звезда» спорт обществинче мала тухассишĕн пынă ăмăртура иккĕмĕш вырăн йышăнчĕç. И. В. Сталин ячĕпе ирттернĕ кроса 500 ытла йĕлтĕрçĕ хутшăнчĕ.

Çуллахи спорт сезонне хатĕрленнĕ май цехсенче футбол командисемпе волейболла выляканен командисене йĕркеленĕ. Кунпа пĕрлех тĕл перекенсен, шывра ишекенсен, велосипедпа чупакансен секцийĕсем кăçалхи сезонта чылай ĕçсем туса ирттермелле. Халĕ цехсенчи футбол тата волейбол командисем, чупкăлла выляканен командисем пĕр-пĕринпе ютташла тĕл пулса выляççĕ. Футбол команди республика кубокне илессишĕн пыракан ăмăртăва хатĕрленет.

Комбинатри физкультурниксем июнĕн 15-мĕшĕнче физкультурниксен спартакиадине хутшăнаççĕ.

А. ХАЯРКИН.

УЙĂХЛĂХА ХУТШĂНСА

ШĂХАСАН. Тимĕр-тăмăр пухмалли уйăхлăха хутшăнса, Уйкас-Кипек ялĕнчи тимĕр-тăмăр пухма бригада тунă. Бригадăра 15 çын. Вĕсем куллен 300—500-шер килограмм тимĕр-тăмăр пухаççĕ. Çак бригада уйăхлăх вĕçленнĕ тĕле 6.000 килограмм тимĕр-тăмăр пухма обязательство йышăннă.

Г. ЛУЧ.

Редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

СССР халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантармалли пиллĕкмĕш государственнăй заем

3-мĕш выляврa выляв укçи тухнине кăтартакан

СПРАВКА-ТАБЛИЦА

Выляв 1952 çулхи майăн 18-мĕшĕнче Брест хулинче пулнă.

Таблицăра 100 тенкĕлĕх облигаци çине миçе тенкĕ выляв укçи тухнине кăтартнă.

Выляв укçи шутне облигаци хакĕ те кĕрет.

Заемăн мĕнпур 275 разрядĕнчи çак серисемпе облигацисен номерĕсем çине выляв укçи тухнă:

Сери № №	Облигаци № №	Миçе тенкĕ	Сери № №	Облигаци № №	Миçе тенкĕ	Сери № №	Облигаци № №	Миçе тенкĕ	Сери № №	Облигаци № №	Миçе тенкĕ
080407	41*)	1 000	085644	15*)	1 000	090324	17*)	1 000	095499	44*)	1 000
080754	44*)	1 000	085737	1—50	200	090520	50*)	1 000	095601	1—50	200
080915	27*)	1 000	085779	47*)	1 000	090628	08*)	1 000	095795	26*)	5 000
081070	1—50	500	086202	1—50	200	090676	1—50	200	095968	1—50	200
081286	1—50	200	086331	35*)	1 000	090678	07*)	1 000	096042	40*)	1 000
081464	34*)	1 000	086377	26*)	1 000	090904	27*)	1 000	096056	1—50	200
081631	1—50	500	086384	18*)	1 000	091010	07*)	1 000	096170	1—50	200
082263	49*)	1 000	086423	1—50	500	091416	1—50	200	096214	1—50	200
082272	1—50	200	086470	10*)	1 000	091475	1—50	500	096223	1—50	200
082282	44*)	1 000	086504	18*)	1 000	091847	10*)	10 000	096326	1—50	200
082294	45*)	1 000	086533	38*)	1 000	091936	1—50	500	096365	1—50	200
082296	1—50	500	086560	17*)	1 000	092044	12*)	1 000	096409	15*)	5 000
082400	1—50	500	086580	20*)	1 000	092257	16*)	1 000	096483	09*)	1 000
082467	27*)	5 000	086906	15*)	1 000	092487	32*)	1 000	096813	29*)	1 000
082476	45*)	1 000	087180	1—50	500	092526	1—50	500	096879	28*)	1 000
082785	09*)	1 000	087239	1—50	200	092736	10*)	1 000	096907	1—50	500
082996	05*)	1 000	087251	1—50	200	092754	1—50	200	097050	14*)	1 000
083006	39*)	1 000	087261	1—50	200	092757	17*)	1 000	097124	48*)	1 000
083091	50*)	1 000	087313	1—50	200	093015	46*)	1 000	097199	05*)	10 000
083176	11*)	1 000	087351	32*)	1 000	093053	48*)	1 000	097269	47*)	1 000
083260	49*)	10 000	087371	20*)	1 000	093174	48*)	1 000	097456	1—50	200
083304	07*)	1 000	087623	25*)	1 000	093186	39*)	5 000	097701	22*)	1 000
083369	1—50	500	087654	05*)	1 000	093373	24*)	5 000	097981	41*)	1 000
083457	04*)	25 000	087867	15*)	1 000	093459	07*)	1 000	097988	24*)	1 000
083564	1—50	200	088119	1—50	200	093482	1—50	200	097991	31*)	1 000
083628	1—50	500	088200	1—50	200	093517	43*)	1 000	098008	48*)	1 000
083716	20*)	1 000	088320	44*)	1 000	093567	1—50	200	098011	06*)	5 000
083749	16*)	1 000	088414	1—50	200	093610	50*)	1 000	098152	08*)	1 000
083834	06*)	10 000	088624	01*)	5 000	093734	30*)	1 000	098273	1—50	500
084075	19*)	10 000	088646	06*)	1 000	093904	30*)	1 000	098342	1—50	200
084133	08*)	1 000	089093	33*)	5 000	093912	1—50	500	098393	43*)	1 000
084243	30*)	1 000	089152	13*)	1 000	094052	31*)	1 000	098526	44*)	1 000
084301	24*)	1 000	089235	1—50	200	094075	11*)	1 000	098613	1—50	200
084302	1—50	200	089269	1—50	200	094115	1—50	200	098703	35*)	5 000
084484	22*)	1 000	089588	05*)	1 000	094164	1—50	500	098779	1—50	200
084619	1—50	200	089606	1—50	200	094165	1—50	500	098943	1—50	500
084680	36*)	5 000	089622	36*)	1 000	094213	45*)	1 000	099035	16*)	1 000
084728	20*)	1 000	089770	15*)	1 000	094406	35*)	1 000	099040	1—50	200
084854	18*)	1 000	089854	03*)	1 000	094410	50*)	1 000	099063	1—50	500
084873	24*)	1 000	090048	1—50	200	094561	41*)	1 000	099252	1—50	500
084955	1—50	200	090059	26*)	1 000	094712	42*)	1 000	099317	21*)	1 000
085071	1—50	200	090186	29*)	1 000	094802	1—50	200	099392	01*)	1 000
085224	1—50	200	090210	1—50	200	094831	1—50	200	099398	24*)	1 000
085377	11*)	1 000	090231	1—50	200	094984	1—50	200	099619	38*)	1 000
085404	1—50	500	090318	36*)	1 000	095106	03*)	1 000	099824	18*)	1 000
085441	38*)	1 000				095440	1—50	200			

*) Çак серие кĕрекен облигацисен ытти 49 номерĕ 200-шер тенкĕ выляса илнĕ.

ЧĂВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕН УПРАВЛЕНИЙĔ.

РЕСПУБЛИКАРИ ВЫРĂС ДРАМА ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, майăн 27-мĕшĕнче,

„Евгения Гранде“

Ыран, майăн 28-мĕшĕнче,

„Дама невидимка“

Спектакльсем каçхине 8 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

ВКП(б) обком аппарачĕн партбюровĕпе месткомĕ ВКП(б) членĕ, ВКП(б) обкомĕн аппаратĕнче чылай вăхăт хушши ĕçленĕ

Иван Степанович ВАСИЛЬЕВ

йывăр чирлесе выртнă хыççăн 1952 çулхи майăн 25-мĕшĕнче вилни çинчен тата унăн тăванĕсемпе пĕрле чунтан-чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

1952 çулхи майăн 30-мĕшĕнче Хабаровск хулинче

Государствăн 3 процентлă выляса илмелли шалти заемĕн 27-мĕш вылявĕ пулать

Вылявра заемăн 3 разрядĕнчи облигацисем çине 25.500 выигрыш, пурĕ 13.950.600 тенкĕ тухать. Вăл шутра:

6 выигрыш	50.000-шер тенкĕлĕх
15 выигрыш	25.000-шер тенкĕлĕх
75 выигрыш	10.000-шер тенкĕлĕх
240 выигрыш	5.000-шер тенкĕлĕх
2.100 выигрыш	1.000-шер тенкĕлĕх
23.064 выигрыш	400-шер тенкĕлĕх

Ку заемăн кашни çул улттă тĕп выляв тата хушса ирттерекен пĕр выляв пулать. Тĕп вылявсем пулаççĕ: январĕн 30-мĕшĕнче, мартăн 30-мĕшĕнче, майăн 30-мĕшĕнче, июлĕн 30-мĕшĕнче, сентябрĕн 30-мĕшĕнче тата ноябрĕн 30-мĕшĕнче. Хушса ирттерекен выляв сентябрĕн 30-мĕшĕнче пулать.

Тĕп вылявра тухнă выигрышсене заем облигацийĕсене хăш вăхăтра туяннине пăхмасăр тӳлеççĕ. Хушса ирттерекен вылявра тухнă выляв укçине выляса илнĕ облигацие выляв пуличчен тăхăр уйăх малтан е унтан та маларах туяннă пулсан тӳлеççĕ.

Заем облигацийĕсене перекет кассисем сутаççĕ тата каялла илеççĕ.

Государствăн 3 процентлă выляса илмелли шалти заемĕн облигацийĕсене туянăр!

Государство заемĕсем СССР халăх хуçалăхне малалла аталантарма пулăшаççĕ.

ЧĂВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕН УПРАВЛЕНИЙĔ.

Республика центрĕнче тата районсенче тухса тăракан хаçатсемпе журналсене 1952 çулхи иккĕмĕш çур çулшăн çырăнса илес текенсенчен подписка йышăнма пуçланă.

Республика центрĕнче тухса тăракан çак хаçатсемпе журналсене çырăнса илме пулать:

„Коммунизм ялавĕ“ „Советская Чувашия“ | „Çамрăк большевик“ „Молодой большевик“

„Агитатор блокночĕ“ (вырăсла тата чăвашла тухать)

Подписка укçине «Союзпечать» уйрăмĕсемпе почта уйрăмĕсем, колхозсенчи письмоносецсем, предприятисемпе учрежденисенче подписка пухакан общественнăй уполномоченнăйсем йышăнаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, илемлĕх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01108 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.